Ц. Б. им. Горького
0

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938
МАРТ
11
ЕРНЕКУН
57 (4870)-мĕш №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйĕн 5—23

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕп Комитетĕнче

Аслă шкулсенчен 1937 çулхи IV-мĕш квартăлта вĕренсе тухнисене мĕнле ĕçе йарасси çинчен

I. Аслă шкулсенчен вĕренсе тухнисене ĕçе йанин итогĕсем çинчен

1. ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ аслă шкулсенчен 1937 çулхи IV-мĕш квартăлта вĕренсе тухнисене—пурĕ 12.520 çамрăк специалиссене ĕçе йанине çирĕплетнĕ, — тĕрлĕрен специаљнăçлă инженерсем 7.190, агрономсем 1.049, зоотехниксем 1.115, медицинă врачĕсем 1.274, физиксем, химиксем тата ытти специалиссем 1.087—вĕсем государствă университечĕсенчен вĕренсе тухнă, тата ветеринари врачĕсем 342, економиссем 298, ытти специалиссем 165, вĕсене çакăн пек ĕçсене йанă:

А. Халăх комиссариачĕсем тăрăх

Йăвăр промышленнăç Халăх Комиссариачĕ	2.083
Оборонă промышленнăç Халăх Комиссариачĕ	1.258
Машиностройени Халăх Комиссариачĕ	488
Çăмăл промышленнăç Халăх Комиссариачĕ	456
Апат-çимĕç промышленнăç Халăх Комиссариачĕ	649
Вăрман промышлĕннăç Халăх Комиссариачĕ	96
Чукунçул транспорт Халăх Комиссариачĕ	710
Шыв-çул транспорт Халăх Комиссариачĕ	78
ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Граждăнла сывлăш флочĕн Тĕп тытăмĕ	58
Çурçĕр тинĕс çулĕсен Тĕп тытăмĕ	29
Çыхăну халăх Комиссариачĕ	200
Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ	2.527
Совхозсен Халăх Комиссариачĕ	639
Хатĕрлевсен Халăх Комиссариачĕ	31
Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачĕ	1.238
РСФСР Çутĕç Халăх Комиссариачĕ	760
Суту-илӳ Халăх Комиссариачĕ	169
Тулти суту-илӳ Халăх Комиссариачĕ	59
Госплан	92
Финанс Халăх Комиссариачĕ	126
Госбанк	58
ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи искусствă ĕçĕсен Пĕтĕм Сойузри комитечĕ	83
Йустици Халăх Комиссариачĕ	46
Шалти ĕçсен Халăх комиссариачĕ	228
Оборонă Халăх комиссариачĕ	54
Промысла кооперацин Пĕтĕм Сойузри Совечĕ	73
ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи государствă резервисен тытăмĕ	46
Ытти организацисем	191

Б. Мĕнле ĕçе йани тăрăх

а) Предприйатисенчи инженерсем 4.469, трестсенчи, тĕп тытăмсенчи тата халăх комиссариачĕсенчи инженерсем—513, облăçсенчи тата районсенчи çĕрĕç тытăмĕсен инженерĕсем (йалхуçалăхĕн инженер-механизаторĕсем)—183;

б) МТС-сенчи, совхозсенчи, йал хуçалăхĕн ытти предприйатийĕсенчи агрономсем—689, районсенчи çĕрĕç пайĕсен агрономĕсем—103, облăçсемпе крайсенчи çĕрĕç тытăмĕсен тата çĕрĕç халăх комиссариачĕсен агрономĕсем—183;

в) МТС-сенчи, совхозсенчи, йалхуçалăхĕнчи ытти предприйатисенчи зоотехниксем—587, районсенчи çĕрĕç пайĕн зоотехниксем—344, облăçсемпе крайсенчи çĕрĕç тытăмĕнчи тата çĕрĕç халăх комиссариачĕсен зоотехникĕсем—113;

г) Хуласенчи сыватакан учрежденисен медицинă врачĕсем—651, йалти вырăнсенчи сыватакан учрежденисен медицинă врачĕсем—536;

д) Совхозсенчи, йалхуçалăхĕн ытти предприйатийĕсенчи ветеринари врачĕсем—224, районсенчи çĕрĕç пайĕсен ветеринари врачĕсем—70, облăçсемпе крайсенчи çĕрĕç тытăмĕсен тата çĕрĕç халăх комиссариачĕсен ветеринари врачĕсем—29;

е) Районсенчи учрежденисен економисĕсем—184 тата облăçсенчи учрежденисен економисĕсем—69;

ж) Преподавателĕ ĕçне (физиксем, химиксем, биологсем, художниксем тата ыт. те)—551;

з) Аслă шкулсенче, ăслăлăхпа тĕпчев институчĕсенче тата халăх комиссариачĕсенче ăслăлăх ĕçне тăвакансем—798, вăл шутра государствă университечĕсенчен вĕренсе тухнă инженерсем — 174, агрономсем—38, зоотехниксем—27, ветеринари врачĕсем—10, физиксем, химиксем, биологсем, ытти специалиссем—479, тата медицинă врачĕсем—37, економиссем—4, архивăн ăслăлăх работникĕсем—29;

л) Административлă - хуçалăхлă ĕçе, совет ĕçне тата партилĕ ĕçе—2.224 çын йанă, вăл шутра государствă университечĕсенчен вĕренсе тухнă инженерсем—1.851, агрономсем—36, зоотехниксем—44, ветеринари врачĕсем—9, ытти специалиссем—125, тата медицинă врачĕсем—50, економиссем—41, йуриссем—46, куçаракансем—21, художниксем—1.

2. ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ çакна уйрăмах паллă тунă: аслă шкулсенчен 1937 çулхи IV-мĕш квартăлта вĕренсе тухнă 2.127 çамрăк специалиссене хуçалăх ĕçĕнче, совет ĕçĕнче, партилĕ ĕçре йертсе пыма лартнă, вăл шутран:

Предприйатисен, çĕнĕ стройкăсен директорĕсем тата вĕсен заместителĕсем	278
Предприйатисен аслă инженерĕсем тата вĕсен заместителĕсем	204
Цехсен пуçлăхĕсем, аслă механикĕсем тата вĕсем заместителĕсем	731
Халăх Комиссарĕсем çумĕнчи инспекторсем	213
Халăх Комиссариачĕсен тытăмĕсен, секторĕсен, пайĕсен пуçлăхĕсем тата вĕсен заместителĕсем	294
Чукунçулсен службă тытăмĕсен, отделенийĕсен, çтанцисен пуçлăхĕсем тата вĕсен заместителĕсем	138
Тĕп тытăмсен пуçлăхĕсем, трестсен управлайучшийĕсем тата вĕсен заместителĕсем	22
Шкул директорĕсем тата вĕсен заместителĕсем	116
Облăçсенче, крайсенче, республикăсенче совет ĕçĕнче йертсе пыма	86
Партилĕ ĕçре йертсе пыма	45

II. Аслă шкулсенчен 1938 çулта вĕренсе тухакансене ĕçе тĕрĕс вырнаçтарма тумалли ĕçсем çинчен

3. ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ çакна палăртнă: халиччен специалиссене аслă шкулсем хăйсем ĕçе йарса тăнă йĕркене пăрахăçа кăларса, аслă шкулсенчен вĕренсе тухнисене ĕçе йамалли çĕнĕ йĕрке—халăх комиссариачĕсем хăйсем, — халăх комиссарĕсем вĕсен заместителĕсем тата тĕп тытăмсен начаљникĕсем хăйсем çак ĕçе хутшăнса, çамрăк специалиссене ĕçе йамала тунă хыççăн, çамрăк специалиссемпе ĕçре усă курасси тата вĕсене йертсе пырас ĕçе лартасси чылайах лайăхланнă.

Çав вăхăтрах, халăх комиссариачĕсен ĕçĕнче—аслă шкулсенчен вĕренсе тухнисене ĕçе йарас тĕлĕшпе чылайах пысăк çитменлĕхсем пулнă, тесе йышăннă ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ. Халăх Комиссариачĕсем аслă шкулсенчен вĕренсе тухакан кадрсене малтанах тĕплĕн вĕренсе пыман, çамрăк специалиссемпе вĕсем дипломлă ĕçсене панă хыççăн тин паллашнă, çавна пула час-часах специалиссене ăнсăртран панă зайавкăсем тăрăх ĕçе йанисем пулнă. Хăш-пĕр халăх комиссариачĕсемпе тĕп тытăмсен руководителĕсем (ССР Сойузĕпе РСФСР сывлăха сыхлав халăх комиссариачĕсем, Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ, Чукунçул Халăх Комиссариач н паровоз тытăмĕ, Çăмăл промышленнăç Халăх Комиссариачĕн Мускав облăçĕнчи çĕрмамăкĕнчен тĕртекен предприйатисен тытăмĕ) аслă шкулсенчен вĕренсе тухнисене кашнине уйрăммăн ĕçе йарасси çине кирлĕ пек пăхман, çамрăк специалиссене ĕçе йарассине çаплах иккĕмĕш вырăнти работниксем урлă туса пынă,—çавăн пек туни вăл йĕркелĕ ĕç мар.

4. Асăннă çитменлĕхсене пĕтерме, аслă шкулсенчен 1938 çулта вĕренсе тухакан 91. пин çамрăк специалиссене ĕçе йарассине вăхатра тата тĕрĕс тума, ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ çапла йышăннă:

а) Аслă шкулсенчен вĕренсе тухнисене аслă шкулсем хăйсем ĕçе йарса тăнă йĕркене пĕтĕмпех пăрахăçа кăларас.

Çакăн пек йĕрке тăвас: аслă шкулсенчен вĕренсе тухнисене ĕçе йарассине кашнине уйрăммăн Халăх Комиссарĕн хăйĕн çирĕплетмелле, вĕсене ĕçе йамали назначенине, ăçта мĕн ĕçре ĕçлемелине, ĕçукçи мĕн чухлĕ пулмалине кăтартса, Халăх Комиссарĕ тата тивĕçлĕ тĕп тытăмăн пуçлăхĕ алă пусса памала;

б) халăх комиссариачĕсене 1938 çулта аслă шкулсенчен вĕренсе тукакансене вĕрентсе кăлармали календарлă плана тата 1938 çулта специалисем кирлĕ пулассине—предприатисене, должнăçсене кăтартса тунă плана, хăш ĕçе çынсем хăвăртрах кирлине те кăтартса, 1938 çулхи апрелĕн 15-мĕшĕнчен кайа йулмасăр ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕп Комитетне тăратма хушас;

в) халăх комиссариачĕсене студентсем государствă екзаменĕсене париччен, дипломлă ĕçсене хӳтĕличчен ултă уйăх малтан аслă шкулсенчен вĕренсе тухакансемпе кашниннпе палашма тата вĕсене ĕçе йамали плана палăртса хума хушас;

г) аслă шкулсенчен вĕренсе тухакансене кашнине ĕçе вырнаçтармалли плана халăх комиссариачĕсен ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕп Комитетне студентсене вĕрентсе кăлариччен пĕр уйăхран кайа йулмасăр малтан тăратмала;

д) халăх комиссариачĕсене аслă шкулсенчен вĕренсе тухса, дипломлă ĕçсене хӳтленисене, государствă екзаменнĕ панисене, вĕсем ĕçе кайма пуťовкă иличчен, стипенди пама чарăнма тата шкултан тухса кайнă, тесе шутлама—чарас;

е) халăх комиссариачĕсене аслă шкултан вĕренсе тухнă пур специалиссене те кашнине уйрăммăн учота илме, çав специалиссене урăх ĕçе куçарнине халăх комиссариачĕ пĕлсе тăмала йĕрке тума хушас.

Сылтăмла-троцкисла бандитсене, шпионсене, диверсантсене тĕпĕ-тымарĕпех тăпăлтармала—çакăн пек совет халăхĕн кăмăлĕ

Тăван çĕршыва сутакансене персе пăрахмала

ШĂХАСАН. Йамаш йалсовечĕн активĕн, колхоз председателĕсен, комсомолецсен, бригадирсен, звеновосен канашлăвĕ пулчĕ.

Пирĕн чи çывăх та хаклă çулпуçĕ—Аслă Сталин çине, совет халăхĕ çине алă йăтма шутланă шпионла, сăтăрла диверçилĕ ĕç тăвакан Бухарин, Рыков, Йагода тата ытти тăшмансен тискер ĕçĕсем çинчен райкомол секретарĕ Захаров йулташ каласа пачĕ.

Йамашри „Ударник" колхозăн иккĕмĕш бригадăн бригадирĕ Стеклов Георгий çак шпиŏнсем, бандитсем çинчен илтсен çапла каларĕ:

— Бандитсем пирĕн совет халăхĕн чунтан йуратнă ывăљне, нихăçан асран каймн Сергей Миронович Кирова вĕлерчĕç. Çавăн пекех, совет халăхĕн чи йуратнă аслă писателне, Сталинăн çывăх тусне—Алексей Максимович Горькине те вĕсен алли вĕлерчĕ. Халăх тăшманĕсене çĕр пичĕ çинчен шăлса тăкар!

Бољшевикла сисĕмлĕхе ӳстерсе, тăшмансене тăрă шыв çине кăларса ответ тытарар!

Канашлу хайĕн йышăнăвĕнче:—чечекленекен совет çĕршывне таткаласа ваккăн та, куртăмăн та сутма шут тунă Бухарина, Рыкова, Йагодана, Крестинскине, Чернова тата ыттисене те персе пăрахма ыйтрĕ. Вĕсен агенчĕсене, вĕсен йулашкийĕсене шыраса тупса нимĕн йулмиччен кăкласа ывăтмала, —тесе хăварчĕ.

Ал. Иванов.

Вĕсен ирсĕр ĕмĕчĕсем нихăçан та пурнăçа кĕреймĕç!

Бухарин, Рыков, Йагода тата заговорла ушкăнăн ытти бандичĕсен йĕрĕнчĕклĕ сăтăрла ĕçĕсем çинчен пĕлсен, Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçула тунă çĕрте ĕçлекенсемпе служăшчисем митинг туса иртерчĕç.

Митингра çапла йышăнчĕç: троцкисла-бухаринла бандитсем пирĕн çулăмлă трибуна—бољшевика, йуратнă Кирова мăн çул çинчи вăрă-хурахсем пек вĕлерчĕ. Весемех пирĕн йуратнă руководителсене—Куйбышева, Менжинскине, пирĕн тăван писателе—М. Горькийе вĕлерчĕ. Çав урнă кашкăрсемех пирĕн аслă çулпуçсене В. И. Ленина, И. В. Сталина, И. М. Свердлова вĕлерме заговор тунă. Çавсемех пирĕн аслă тăван Сойуза вакласа, фашисла государствăсене сутма, социалисăмла ирĕклĕ çĕршывра капиталисăм йĕрки тума шутланă. Анчах вĕсен ирсĕр ĕмĕчĕсем пурнăçа кĕреймерĕç. Пирĕн вичкĕн те хăватлă НКВД çĕлен-калтасене хăйĕн бољшевикла аллипе тытса пăчăртарĕ. Çак ирсĕр тăшмансене персе пăрахма ыйтатпăр.

Демйакин.

Совет ĕçхалăхĕ Совет судĕнчен ирсĕр бандитсене персе пăрахма ыйтать.
Ӳкерчĕк çинче: Митинг умĕн Мускаври Л. М. Каганович йачĕпе тăракан господшипник заводĕнчи рабочисем „Правда" умстатйине вулаççĕ.
Б. Фишман фото-ӳкерчĕкĕ (Сойузфото).

„Тăшман парăнмасан—ăна пĕтереççĕ"

Епĕр, Шăхасан районĕнчи Ăвăспӳртри учителсем, йал активĕ тата колхозниксем „сылтăмла-троцкисла блок" йатлă бандитла ушкăнри сăтăрçăсем, çынвĕлеренсем, шпионсем пирĕн телейлĕ те аслă çĕршыва сутма, унта тепĕр хут капиталисăмла йĕрке тума тăнине чĕререн тарăхса пĕлтĕмĕр. Епĕр хамăрăн митингра пĕр саслăн çапла йышăнатпăр: пирĕн чи лайăх çынсене вĕлерекен, тăван çĕршыва пăрахса тăшмана сутăнакан çĕленкалтасене кун çул пулмала мар. Пирĕн аслă писател, йуратнă Максим Горький каланă пек, „тăшман парăнмасан—ăна пĕтереççĕ". Епĕр совет судĕнчен çав ирсĕр тăшмансене персе пăрахма ыйтатпăр.

К. Лазарев.

Йутçĕршывсенчи пичет совета хирĕçле „сылтăмла-троцкисла блок" процесĕ çинчен

Каталонири рабочисен Пĕтĕмĕшлĕ сойузĕн органĕ „Нотисиас" йатлă хаçат, редакцирен çырнă „Троцкий—фашисăмăн агенчĕ" йатлă статйинче çапла паллă тăвать: Совета хирĕçле „сылтăмла-троцкисла блок" пуçлăхĕсен процесĕ Испанири фашисăма хирĕç тăракансемшĕн пуриншĕн те паллă пулса тăмала.

„Совет сучĕ,—çырать хаçат,—предателсене пĕтĕм тĕнче умĕнче суд тăвать. Ку вăл çакна лайăххăн кăтартса парать: ССР Сойузĕ пĕтĕм тĕнчери фашисăмран вайлăрах. ССРС ĕççыннисемпе тĕнчери пролетариат хăйсен пур тăшманĕсене те пĕтерсе хума пултараççĕ"

Венăри хаçатсем пурте ТАСС совета хирĕçле „сылтăмла-троцкисла блок" процесĕ пыни çинчен пĕлтернисене пурне те куранмала пичетлеççĕ. Троцкисла-бухаринла бандитсем А. М. Горькине тискеррĕн вĕлерни çинчен кăтартса пани пирки çырнă статйасен йачĕсем йышлă халăхсем тарăхнине кăтартса параççĕ. „Нейе фрейе пресс" йатлă хаçат çапла çырать: „Максим Горькине емелленĕ врачсем кăтартса панисем чуна-чĕрене чĕтĕретеççĕ".

(ТАСС).

Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен Коммунисла кунĕ

Мартăн 8-мĕшĕнче Пысăк театрта пулнă чаплă пуху

Пысăк театр хĕрарăм-работницăсемпе, инженерсемпе, профессорсемпе, врачсемпе, љотчицăсемпе, артискăсемпе, учителницăсемпе, килхуçи хĕрарăмĕсемпе тулнă. Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен Коммунисла кунĕн праçникне вĕсем таса тумсемпе пынă. Ача амăшĕсем нумайĕшĕсем хăйсемпе пĕрле ачисене илсе пынă, вĕсем пайан хăйсен ачисене ача сачĕсенчен ытти кунхинчен маларах илсе тухнă. Партерте, ложăсем çинче шкул ачисемпе пионерсен хĕрлĕ галстукĕсем йалкăшаççĕ.

Пуху президиумĕнче Угаров, Николайева, Братановский, Дедиков йулташсем, пирĕн çĕршывăн йатлă хĕрарăмĕсем—Йевдокийа Виноградовă, Перасковйа Пичугина, Валентина Гризодубова, Ољга Леонова, Татйана Федорова.

Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен Коммунисла кунĕ йачĕпе пухăннă чаплă пухува ПСК(б)П Мускав хула Комитечĕн секретарĕ Братановский йулташ уçать.

Хисеплĕ президиума пысăк çĕкленӳпе суйлаççĕ, **Сталин йулташăн** йатне асăнсан оваци нумайччен чарăнмасть. Вăл йертсе пынипе пирĕн çĕршыври хĕрарăма телейлĕ, савăнăçлă пурнăçпа пурăнма пур условисене туса панă. „Сывă пултăр пирĕн йуратнă çулпуç Сталин йулташ!" тесе кăшкăрнă сасăсем йанăраççĕ.

Тăваллăн алă çупнипе хисеплĕ президиума **Молотов, Каганович, Ворошилов, Калинин, Андрейев, Микойан, Чубарь, Косиор, Жданов, Йежов, Хрушчов, Ейхе, Петровский, Булганин, Димитров, Тељман, Хозе Диас, Долорес Ибаррури йулташсене** суйлаççĕ.

Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен Коммунисла кунĕ çинчен Професçилĕ Сойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕн секретарĕ **К. И. Николайева** йулташ доклад туса панă.

Герасимова йулташ—Мускаври Сталин йачĕпе тăракан автозаводăн литейнăй цех маçтăрĕ сăмах тухса калать.

Социалисăм строителствинче творчествăлă активлăх кăтартакан совет хĕрарăмĕсем кашни çулах пиншерĕн çĕнĕрен ӳссе пыраççĕ. Герасимова йулташ хăй çинчен, совет влаçĕн çулĕсенче вăл куљтурăпа политика тĕлĕшĕнчен ӳсни çинчен каласа парать.

Трибунă çинчен Кунцевск районĕнчи „Заря социализма" колхоз колхозници Чучина-Капайева йулташ хĕрӳлĕ сăмах калать.

Дзержински районри килхуçи хĕрарăмĕсен йачĕпе кунта пухăннисене Борисова йулташ саламлать. Вăл совет условисенче килхуçи хĕрарăмĕ политикăлă, общественлă тата куљтурăлă пурнăçа йепле йавăçса, хутшăнса пыни çинчен каласа парать, килхуçи хĕрарăмĕсем общественлă ĕçре ĕçлени çинчен нумай фактсем илсе кăтартать.

Совет хĕрарăмĕсем социалисăм строителствин пур участкисенче те пысăк паттăрлăх кăтартса ĕçлени çинчен љотчицă-орденоноскă Гризодубова йулташ каласа парать. Гризодубова çапла каласа панă: кирлĕ пулсан, совет хĕрарăмĕ тăшмана самољот çинчен, карап палуби çинчен, ăçтан килнĕ унтан çĕмĕрсе тăкĕ,—тенĕ.

Тухса калаçакансем пурте хăйсем Ленин—Сталин партине чĕререн йуратса тăни çинчен, халăхсен аслă çулпуçне, ăслă учителе тата ĕççыннисен ашшĕне Сталин йулташа чĕререн йуратса тăни çинчен кăтартса панă.

Пухура пулнисем мухтавлă наркомвнудељцăсене тата сталинла Наркома Н. И Йежов йулташа, шпионсен тата çынвĕлеренсен сылтăмла-троцкисла бандин ирсĕр преступленийĕсене тупса палăртнăскерсене, хĕрӳлĕн саламлаççĕ. Вĕсем пĕр сасăпах фашисăмăн çав ирсĕр тарçисем тĕлĕшпе чи çирĕп, ним хĕрхенмеле мар приговор йышăнма ыйтнă.

Чаплă пухура пулнисем пĕр кăмăлпа, тăваллăн оваци тунипе Сталин йулташ йатне саламлă çыру йанă.

(ТАСС).

Совета хирĕçле „сылтăмла-троцкисла блок" процесĕ

Мартăн 4-мĕшĕнчи каçхи лару

Айăпланакан Розенгољца допрос туни*)

Вышинский. Айăпланакан Розенгољц, хăвăр тунă преступленисем çинчен кĕскен каласа парăр.

Розенгољц. Епĕ, пурте пĕлеççĕ, 1920—21 çулсенче профсоюзсем çинчен дискуççи пынă вăхăтра троцкиссен профсоюз оппозицине хутшăннă. Унтан 1923 çулта епĕ „46-тăн платформи" çеçкерне алă пуснă.

1929 çулта Крестинский мана ваљути Троцкий кăтартуне илсе килчĕ,—çав кăтартура Троцкий пире, мана тата Крестинские, троцкиссем пулса тăнине пытарма, май килнĕ таран ответлăрах вырăна вырнаçма, çĕршыври пире майлă вăйсем, Троцкий шухăшĕпе, çиелте тухас вăхăта, вара çĕнĕ влаçа организацилĕнĕ çĕре хутшăнма май килес вăхăта кĕтсе тăма хушнă.

Вышинский. Çапла ĕнтĕ, 1929 çулта Крестинский сире ваљути Троцкин кăтартуне илсе килнĕ?

Розенгољц. Çапла. Малала, 1933 çулта Крестинский йăтнатшалăхран çыру илнĕ. 1933 çулта епĕ йăтнатшалăхсенче пулнă. Австрири Фельдеира Седовпа курнăçнă. Унтан епĕ Седовпа 1934 çулта Карлсбадра курнăçнă.

Вышинский. Есĕр унпа мĕн çинчен калаçнă?

Розенгољц. Седов Троцкин çакăн пек кăтартуне пачĕ: сылтăммисемпе çыхăнмала, вĕсемпе пĕр пулса ĕçлесе пымала, терĕ.

Вышинский. Тĕллесех калаçатăр кампа?

Розенгољц. Манăн Рыковпа тата Рудзутакпа çыхăнма кăтарту пур, тесе пĕлтерчĕ Крестинский. Тата Седов Тухачевскипе май килнĕ таран ытларах та тачăрах çыхăçмо кирли çинчен нумай каларĕ,—Троцкий шухăшĕпе, Тухачевскин çарти ушкăнĕ контрреволюцилĕ выступленире ĕçе татса паракан вăй пулмала пулнă. Калаçнă чухне Троцкий Тухачевскин бонапартисла тĕллевĕсем çинчен шикленни палăрчĕ. Çавăнпа Троцкий переворот вăхăтĕнче пур çĕрте те хамăр çынсене лартса тухма хушнă. Çав кăтартува пурнăçа кĕртме Крестинский Тухачевскипе çыхăннă. Епĕ çав пĕтĕм вăхăт хушшинче, 1933 çултан пуçласа 1937 çула çитиччен, Рыковпа тата Рудзутакпа çыхăнса тăнă.

Седовпа калаçнă чухне чи пăлă вырăнта—правителствă составне палăртас тĕлĕшпе тăнă ыйту пулнă. Тата Седов Троцкий террор организацилеме хушни çинчен пĕлтерчĕ. 1933 çултах тулти суту-илӳ ĕçĕнче сăтăр тăвасси çинчен кăтартусем пулнă, Седов—Троцкий Германири кирлĕ ушкăнсемпе килĕшнĕ, тесе пĕлтерчĕ,—çавна май Троцкишĕн сăтăрлăх пит кирлĕскер пулнă, унăн хăйĕн авторитечĕ ан пăсăлтăр, тесе, тата çав асăннă килĕшӳ ан пăсăлтăр тесе те кирлĕ пулнă. Сăтăрлани—тулти суту-илӳ ĕçĕнче Германипе Йапони интересĕсене пулăшас çулпа пынă. Унтан тата тулти суту-илӳ каналĕсем урлă троцкисла йухăма укçа-тенкĕ парас ыйту пулнă, ку ыйтува Троцкипе Седов темиçе хут та тата питĕ çине тăрса лартатчĕç.

Вышинский. Ун чухне вăрçă çинчен ыйту лартнăччĕ-и?

Розенгољц. Троцкин вăрçă тĕлĕшĕнчи тĕллевĕ—Совет Союзне вăрçăра çĕмĕрсе тăкмала тăвасси пулнă.

Вышинский. Вăрçă пулать тесе шутланă-и? Хăçан пулĕ тенĕ?

Розенгољц. 1935—1936 çулсенче.

Вышинский. Апла пулсан, ун чухне Троцкий, вăрçă 1935,1936 çулсенче сиксе тухмала тесе шутланă. Çавăнпа сыхăнулăн вара...

Розенгољц. Переворот тăвас ыйту тăнă. Унтан тата ку ыйтури установкăсенче улшăну пулса тăчĕ, мĕншĕн тесен, малтанхи вăхăтра вăрçăлă переворота пулаç вăрçă пуçламĕшĕпе пĕр вăхăтра тусан аван пулать тата ăна çав вăхăтрах тума кирлĕ тесе шутланă. Кайран вара, вăрçă тухас вăхăт вăрăма тăсăласси палăрнине кура, переворот тăвассине хăвăртлатсан, вăрçăлă событисене кĕтсе тăмасан аванрах пулать, тесе ыйту тăчĕ. Ку вара 1937 çулта пулнă.

Вышинский. Çак йенчен илсессĕн Пйатакова арĕслени çине мĕнле пăхнă есĕр?

Розенгољц. Пйатакова суд тунă хыççăн Троцкирен çыру килнĕччĕ. Вăл çырура Тухачевский вăрçăлă переворот тăвассине мĕн май килнĕ таранах хăвăртлатма кирли çинчен ыйту лартнăччĕ. Çакна май манăн хватерте канашлу пулчĕ.

Вышинский. Мĕнле çыру пулнă-ши вăл, тĕплĕнрех пĕлме йурамаст-и?

Розенгољц. Унта Троцкий темиçе ыйту та лартнăччĕ. Пуринчен малтан çакна кăтартса панăччĕ: ĕçе вăраха йарсан пур контрреволюцилĕ вăйсене те пайăнпайăн аркатса пĕтерĕç, тенĕччĕ. Çавăнпа та, кадăрсене халех чылай çĕмĕрсе тăкнине кура, тума май килекен ĕççене мĕн май килнĕ таранах хăвăрт тăвас пулать, тенĕччĕ.

Вышинский. Тĕслĕхрен?

Розенгољц. Суд Пйатакова персе пăрахмала приговор тунине хирĕç ответлесе, партипе правителствă руководителĕсене хирĕç террорла ĕçсем тăвассине организацилес ыйту, вăрçăлă переворот тăвассине мĕн май килнĕ таранах хăвăртлатас ыйту лартнăччĕ.

Вышинский. Пйатаков хăйне судра мĕнле тыткаланине, вăл хăйĕн преступленийĕсене йышăннине Троцкий мĕнле хаклани пулнă вăл çырура? Аса илейместĕр-и?

Розенгољц. Вăл вырăнпа епĕ тĕплĕн аса илейместĕп.

Вышинский. Айăпланакан Крестинский, Троцкий çав çырура мĕн çырнине аса илейместĕр-и есĕр?

Крестинский. Пйатаков хăй айăпĕсене йышăннă пирки Троцкий вăл çырура пит хайаррăн çиллене çырнăччĕ. Ун пек тĕлсем пулас-мĕн пулсан, малашне хамăра ун пек тыткаламала мар, тесе хушнăччĕ.

Вышинский. Мĕнле тыткаламала вара хăвна?

Крестинский. Хăвăн айăпна йышăнмала мар?

Вышинский. Тен, икĕ кун кайарах есĕр судра хăвăра мĕнле тыткалани те çав директивăран килмен-ши?

Крестинский. Çук.

Вышинский. Анчах Троцкин çав директивине есĕр асра тытнă вĕт-ха?

Крестинский. Асра тытнă.

Вышинский. Айăпланакан Розенгољц, малала калăр.

Розенгољц. Епĕ Тухачевскипе пĕрле пулнă канашлу çинче çарăнса тăнăччĕ.

Вышинский. Аçта пулнă вăл канашлу?

Розенгољц. Ман патăмра, хватерте.

Вышинский. Сирĕн хватерте канашлу пулнă—камна?

Розенгољц. Тухачевскипе тата Крестинскипе. Вăл 1937 çулхи март уйăхĕн вĕçĕнче пулнă. Вăл канашлура Тухачевский çапла пĕлтерчĕ: вăрçăлă переворот пулассин çине епĕ çирĕп шанса тăратăп, терĕ, срокне те кăтартса пачĕ, майăн 15-мĕшĕн, майăн малтанхи çурийăхĕнче çав вăрçăлă, переворота тума мана май килет, терĕ.

Вышинский. Вăл контрреволюцилĕ выступленин планĕ мĕнле пулнă?

Розенгољц. Тухачевскин темиçе тĕрлĕ вариант та пурччĕ, вĕсенчен пĕри çакăн пекчĕ: çарти хамăр майлă çынсен ушкăнĕ манăн хватере пухăнса, мĕнле те пулин сăлтавпа Кремле кĕме. Кремлри телефон станцине йарса илме, унтан партипе правителствă руководителĕсене вĕлерме пултарасçĕ, тетчĕ. Çакăн çине вăл уйрăмах хытă шанса тăратчĕ.

Вышинский. (Крестинскине). Есĕр çакна çирĕплететĕр-и?

Крестинский. Çапла, çирĕплететĕп. Вăл канашлу Розенгољц патĕнче пулнă.

Розенгољц. Епĕр Крестинскипе пĕрле Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ Молотов тĕлĕшпе террорла ĕç пулма пултарасси çинчен сӳтсе-йаврăмăр.

Вышинский. Малала калăр.

Розенгољц. Троцкисла йухăма ваљута укçа-тенкĕ çаратас тĕлĕшрен тулти суту-илӳпе преступленилле усă курнă. Икĕ пысăк тĕслĕх çинчен калам. Пĕрремĕш—вăл Крайевский пурнăçа кĕртнĕ операцисем. Çав операцисене тунипе троцкисла организацине йе. тӳрремĕнех Троцкине хăйне 300 пин доллара çити укçа-тенкĕ пана.

Вăл ĕçе тивĕçлĕ фирмăсем урлă, комиссионер вырăнне Седовпа усă курса, пурнăçа кĕртсе пынă. Унтан çапла укçатенкĕ парассине тӳрремĕнех епĕ хам та организацилĕнĕ, манăн ку ĕç епĕ договор тунă чух пĕр официаллă çынпа Мускавра килĕшӳ тунă хыççăн пулнă.

Вышинский. Мĕнле официаллă çынпа?

Розенгољц. Пĕр государствăн представителĕпе.

Вышинский. Йутçĕршывсенчи пĕр патшалăх представителĕпе-и?

Розенгољц. Çапла. Вăл килĕшӳ тăрăх виçĕ çул хушшинче çулсеренех Троцкий, чухăмăн каласан, 110 пин доллара йахăн илсе тăмала пулнă. Çавăн çинчен калатăп.

Вышинский. Çапла вара, Троцкине укçа-тенкĕ парса тăрассине есĕр кирлĕ пекех, йаланах илсе тăмала йĕркелесе панă?

Розенгољц. Çапла.

Вышинский. Ку ĕнтĕ пысăкраххи, ваккисем пирки мĕнле? Тĕслĕхрен, 1933 çулта Троцкий аллине икĕ пин фунт стерлинг панă-и?

Розенгољц. Ăна мансăр пуçне, анчах, паллах, мана пĕлтерсе тунă.

Вышинский. Ку вĕт, тулти суту-илӳ тăрăх пулнă, а есĕр ун чухне...

Розенгољц. Епĕ ун чухне Тулти суту-илӳ халăх комиссарĕ пулнă, вăл ĕçе килĕшӳ панă тăрăх тата мана пĕлтерсе..

Вышинский. Апла тăк есĕр тунă. Апла-тăк икĕ пин фунт стерлинг панă. Ку та çавăн пекех пысăк сумма, анчах 110 пин доллар умĕнче—вăл вактĕвек. 1934 çулта Троцкий аллине икĕ пин фунт стерлинг панă-и?

Розенгољц. Çапла, 15 пин фунт, унтан тата тепĕр хут 10 пин фунт панă.

Вышинский. 15 пин, унтан 10 пин, унтан 2 пин, капла 27 пин фунт стерлинга пухăнать-çке.

Розенгољц. Унтан тата 20 пин маркă панă.

Вышинский. Апла пулсан, кун чухлĕ укçа вăл çапах та самайах пысăк. Кун сумне 300 пин доллар хушас. Мĕнле срук хушшинче панă вĕсене?

Розенгољц. Ăна 1933 çултан тытăнса панă. Експортлес тăрăх—300 пин.

Вышинский. Експортлес тăрăх—вăл уйрăм тăрать. Малала тата мĕн кăтартса памалли пур сирĕн?

Розенгољц. Халь манăн çакна паллă туса хăварас килетчĕ: ĕлĕкрех пулнă çулсенче—1923 çулта, манăн ĕçлĕ контакт пулнă...

Вышинский. Кампа?

Розенгољц. Нимĕç çар çыннисен ушкăнĕсемпе ĕçлĕ контакт пулнă май, Троцкий совет сывлăш-çар вăйĕсем çинчен Секта сведенисем пама хушрĕ.

Вышинский. Есĕр патăр-и?

Розенгољц. Çапла. епĕ вăл сведенисене патăм.

Вышинский. Есĕр Троцкине укçа панисĕр пуçне тата Секта шпионла сведенисем панă?

Розенгољц. Çапла. çапла. вăл 1923 çулта пулнă.

Вышинский. Тата унтан кайарахпа та панă-и?

Розенгољц. 1931 çултан пуçласа тулти суту-илӳ тăрăх панă заказсем çинчен сведенисем парса тăнă.

Вышинский. Секретлă, государствă сведенийĕсем?

Розенгољц. Çапла.

Вышинский. Пĕлместĕр-и есĕр, çав вăхăтра Секта çавнашкал сведенисем урăх кам та пулсан паман-и?

Розенгољц. Крестинскипе Рейсхвер хушшинче темĕçле вăрттăн çыхăну пурри пĕлнĕ епĕ.

Вышинский. Апла пулсан, есĕр, айăпланакан Розенгољц, 1923 çултан пуçласа йутçĕршыв государствисене шпионла сведенисем парса тăма тытăннă?

Розенгољц. Тĕрĕс.

Вышинский. Малала калăр.

Розенгољц. Халь епĕ сăтăрла ĕçсем çинчен çакна паллă тăвасшăн: вăл сăтăрла ĕçĕн задачи—пуринчен ытла Германийе пулăшасси, унтан кăшт Йапонийе пулăшасси пулнă.

Çав питрех пысăк сăтăрла ĕçсенчен—паллах, вĕсем çавăнпа пĕрлех тата сутăнчăклă. изменăлă ĕçсем пулса тăраççĕ,—пĕрне каласшăн епĕ. Вăл—Германипе нефт договорĕ туни. Ылттăн кайашĕсене Германийе сутнă факта каласа хăваратăп, унпа Совет Союзĕнче усă курнă пулсан усăлăрах пулнă пулĕччĕ. Цинк концентрачĕсене йутçĕршывсене сутни, аванслă йĕркепе йутçĕршывсене сутни, унтан рынкăра чукун çитменнипе çивчĕ нушша пулнă вăхăтра чылайах нумай чукуна Йапонийе йӳнĕ хакпа сутни пулнă. Фрахтовой ордерсене вăхăтра памаппине пула виçерен иртерсе тӳлемеле туни пулнă, чылай договорсене, уйрăмăн илсен, форсмажор çинчен калакан пункта, убыткă кӳмеле условисемпе туни пулнă. Çавăн пекех тата Монголийе, Хĕвеланăç Китайа сутнă таварсене чарса тăни пулнă.

Совет Союзне вăрçăра çĕмĕрсе тăкмала тăвас шутпа тунă сăтăрла ĕçсем çинчен уйрăмăнах паллă туса хăварас пулать, вăл—оборонăшăн кирлĕ йапаласене йутçĕршывсенчен илсе килессине. чарса тăни пулнă. Тĕп вырăнта тăракаписем çаксем пулаççĕ ĕнтĕ, урăх çук.

Айăпланакан Крестинские иккĕмĕш хут допрос туни*)

Председател. Айăпланакан Крестинский, ку таранччен каласа панă ĕçсем çинче чарăнмасăр, хăвăрăн контрреволюцилĕ ĕç çинчен каласа пăрăр-ха.

Крестинский. Епĕ хамăн вăрттăн троцкисла ĕçе тума 1921 çул вĕçĕнче тытăнтăм. Унчухне епĕ Троцкий сĕнне тăрăх, вăрттăн ĕçлекен троцкисла организаци тума, Троцкирен, Пйатаковран, Серебрйаниковран, Преображенскирен тата манран, Крестинскирен, тума палăртнă вăрттăн ĕçлекен троцкисла организацин центрне хама кĕртме килĕшӳ патăм. Çак сĕнĕве мана Троцкий партин 9-мĕш сйесĕ хыççăнах пачĕ, çулталăк кайарахран епĕ преступлени турăм. Айăпланакан Розенгољца допрос тунă чухне епĕ каласа пана преступленийе турăм,—Троцкий сĕнĕвĕ тăрăх епĕ Сект генералпа, унăн урлă рейхсверпа троцкисла организацине укçа-тенкĕ парса тăрасси çинчен килĕшӳ тунă. Пире укça-тенкĕ панăшăн епĕр рейхсвера шпионла сведенисем пама пулнă. 1923 çултан пуçласа Сектпа килĕшӳ тăвассине, пуринчен ытла Мускавра тунă, хăш чухне Берлинра та пулнă. 1926 çулта рейхсвер çак килĕшӳве пăрахăç тăвасси çинчен ыйту лартрĕ. Епĕ ку пирĕн умма пысăкрах ыйтусем лартас шутпа тактикăла утăм пулнă пулĕ, тесе шутлатăп.

Вышинский. Кама, „пире"?.

Крестинский. Троцкиссене. Епĕр ун чухне пирĕн пата çирĕп ваљутăпа... йаланах укçа килсе тăрасса хăнăхса çитнĕ.

Вышинский. Йутçĕршыв разведкисенчен укçа илме вĕреннĕ?

Крестинский. Çапла, çак укçатенкĕ тĕрлĕ çĕршывсенче сарăлса пыракан троцкисла ĕçе вăйлатма, издателствă ĕçне тата ыттисене... тума кайнă.

1926 çулта, троцкисла ушкăнсем Мускаври парти руководствине, çавăн пекех тăванлă компартисен руководствине хирĕç хĕрсе кĕрешнĕ вăхăтра, çак укçасене илме килĕшменни троцкиссен кĕрешӳне вăйсăрлатма пултарнă Çавăнпа та, Сект генерал çав укçана парса тăма чарăнать тесе асăрхаттарсан, епĕ паллах ĕнтĕ, вăл пире хăйĕн условисем тăрăх çав килĕшĕве малала чăсма пултарĕ, тесе сĕнӳ кăларса тăратрăм.

Ун чухне вара вăл ăна йаланах мар, хутран-ситрен çеç парса тăнă шпионлă сведенисем çителĕклĕ мар, ку ĕçе йалан туса пымала, кунсăр пуçне пулма пултаракан тĕнчери вăрçă вăхăтĕнче троцкиссем влаçа алла илсен, троцкисла влаç Германи буржуазийĕ кăларса тăратакан ыйтусене шута илет, тесе троцкисла организацин обйазателствă памала, тесе сĕнӳ кăларса тăратрĕ. Сект чи малтан, троцкиссем влаçа хăйсен аллине илсен, Германи буржуазипе концеççи тата ытти договорсем тăвас ыйту лартрĕ. Троцкирен ыйтса пĕлнĕ тата вăл килĕшнине пĕлнĕ хыççăн, епĕ Сект генерала вăл ыйтнă ыйтусене килĕшӳлĕ ответ патăм, пирĕн информаци те пĕрмайах пулма пуçларĕ. Вăрçă хыççăн мĕнле килĕшӳсем пулма пултарасси çинчен сăмахпа каланă.

Вышинский. Каламастăр-и, есĕр мĕн чухлĕ укçа илнĕ?

Крестинский. 1923 çултан пуçласа 1930 çула çитиччен епĕр кашни çулах 250 пиншĕр маркă ылттăн ваљутăпа илсе тăнă.

Вышинский. Ку вăл, çак вăхăтра есĕр икĕ мĕлйун маркă ылттăнпа илнине пĕлтерет?

Крестинский. Çапла, 2 мĕлйун маркă пулать. 1928 çулти октаберте, çав вăхăтра Алма-Атара ссылкăра пулнă Троцкирен çыру илтĕм. Ку çырура Троцкий нимĕçсенчен илекен укçана Маслова йе Троцкин Францири тусĕсене: Росмера, Медлен Паза тата ыттисене пама хушнă.

Епĕ Сект генералпа çыхăнтăм, ку вăхăтра вăл отставка тухнă, нимĕнле вырăнта та пулман. Вăл Гаммерштейнпа калаçса укçа илме пулчĕ. Вăл укçа илнĕ.

Вышинский. Гаммерштейн кам вăл?

Крестинский. Гаммерштейн ун чухне рейхсвер штабĕн начальникĕ пулнă, 1930 çултан пуçласа рейхсвер командуйушчийе пулса тăчĕ. Епĕр унпа курăнаçнă чухне вăл пирĕн ăна шпионла сведенисем тăратмали обйазанноçсемсĕр пуçне, манран хăшпĕр информацисем илес шутпа тĕнчери лару-тăру йытăвĕсем тăрăх политикăлă калаçу пуçларĕ. Епĕ ăна вăрттăн ĕçсем çинчен хăшпĕр информацисене патăм.

Вышинский Вăл укçа тӳлерĕ-и?

Крестинский. Çапла, вăл мана укçа пачĕ.

Вышинский. Вăл укçине мĕншĕн пани çинчен каларĕ-и?

Крестинский. Пĕлнĕ.

Вышинский. Сирĕн троцкисла организаципе генерал Сект хушшинче 1921 çулччен те çыхăну пулнă?

Крестинский. Унччен те çыхăну пулнă, ун çинчен епĕ судăн усă ларăвĕнче каласшăн мар.

Вышинский. Хăшпĕрисене халех калама йурать. Пĕрремĕшĕнчен—Кооп кам пулнă?

Крестинский. Кооп вата меньшевик пулнă. Вăл Троцкин çывăх çынĕ пулнă.

Вышинский. 1920 çулти ийуљ уйăхĕнче, çав ыйту тăрăх есĕр халĕ каласшăн мар пулмала, ун çинчен судăн хупă ларăвĕнче калăр, çак Кооп сирĕнпе Сект хушшинчи çыхăнăва йĕркеленĕ-и?

Крестинский. Çапла, Сект Кооппа ыйтрĕ, унпа килĕшрĕ.

Вышинский. Епĕ кунтан çапла вывăд тăватăп: 1921—1922 çулсенче çеç мар, 1920 çултах Троцкий Кооп урлă Сект патне каймали çула шыраса тупнă?

Крестинский. Кăна епĕ тĕпĕйĕрĕпе пĕлместĕп, унчухне официаллă тĕлпулусем пулнă.

Вышинский Виççĕмĕш томри вăтăрмĕш листари çак вырăна вуласа кăтартма ирĕк парăр: „Çак калаçусем вăхатĕнче троцкисла вăрттăн пытанса ĕçлеме укçа-тенкĕ парасси çинчен ыйту тухса тăчĕ... ку укçа-тенкĕ ыйтуне Троцкий пуçарчĕ..."

Крестинский. Тĕрĕс.

Вышинский. ....„Унăн троцкиссен вăрттăн ĕçĕсене пулăшма уйăрнă аппаратри укçа-тенкĕпе усă курма темĕнле йăвăрлăхсем пулнă. Ун чухне вара Кооп кирлĕ укçа-тенкĕне Германи рейхсверĕнчен илме хăтланса пăхма сĕнӳ пачĕ.. Çапла ĕнтĕ Кооппа Сект генерал хушшинче ку вăхăт тĕлне çыхăну пулнă"...

Ку вăл айăпланакан Крестинский 1937 çулти ийунĕн 9-мĕшĕнче кăтартса пани. Айăпланакан Крестинский, есĕр çакна çирĕплететĕр-и?

Крестинский. Çапла, çапла.

Вышинский. Айăпланакан Крестинский, малала кăтартса парăр.

Крестинский. 1929 çулта, кĕркунне, епĕ Кăнтăр Германире, Кисингенра отпускăра пулнă чухне, мана Берлинран Йакубович телефонпа чĕнчĕ, Троцки ывăлĕ мана хăйĕн ашшĕ хушнă тăрăх курасшăн, тесе пĕлтерчĕ. Епĕ ăна Кисингена килме сĕнтĕм. Тепĕр кунне, йе тепĕр икĕ кунтан Седов тата Йакубович килчĕç.

Седов мана Троцкий партирен кăларнă троцкиссене партине хирĕç оппозицилĕ кĕрешме пăрахатпăр тесе, вĕсене кайалла партине илме ыйтса зайавлени пама хушни çинчен каласа пачĕ. Уйрăмăн илсен, епĕ Пйатаковпа, Радекпа усăнах калаçма пултарни çинчен пĕлтерчĕ. Пйатаков троцкисăма пăрахни çинчен 1928 çулта, Радек 1929 çулта зайавлени панă пулсан та, вĕсем троцкисăм йенчех йулнă тесе каларĕ. Малала вăл массăсем хушшинче ĕçлессине пăрахăçа кăларасси, организацилĕ чăмара сыхласа хăварасси, вĕсене партипе совет организацисене кĕртесси, вĕсене ответлă вырăнсене вырнаçтарасси, троцкисла организацисен кадăрĕсене нумайлатас, çирĕплетес тĕлĕшпе шанчăклă çынсене пĕрерĕн-пĕрерĕн троцкиссен ретне илеси çинчен каларĕ. Манăн рейхсверпа информаци парас тата укçа илес çыхăнăва малашне те тытса пымала, манăнах Троцкипе унăн Йевропăри тата Совет Союзĕнчи троцкиссем хушшинчи çыхăнăва майлаштармала пулнă. Троцкипе çапла майпа çыхăну тытмала тунă. Епĕ тухса кайсан, Берлинра пĕр çулталăка Йакубович йулчĕ, вăл манран дипломатилĕ почтă урлă çыру илесси çинчен килĕшсе таталтăмăр, кирлĕ пулсан Троцкий патне йарать, вăл Седовпа тĕлпулнă чухне, çав çырусене хăш адреспа Парижа Троцкий патне йамали çинчен килĕшсе таталнă.

Кунсăр пуçне манăн полпредствăри тепĕр работникпа—Штернпа çыхăну пулнă, вăл троцкисла шухăшлă пулнă, Йакубович Берлинран кайсан, епĕ Йакубовичран ман çав хушусене йышăнса илмеле те, пурнăçа кĕртме Штерна хушма ыйтрăм, çакна епĕр тунă та.

Кунсăр пуçне, манран Радек ыйтнă тăрăх, епĕ хамăн Йутçĕршыв халăх комиссариачĕн пичет пайĕнчи работниксем урлă уйрăм йутçĕршывсен хаçат корреспонденчĕсене вăрттăн информацисем патăм.

Вышинский. Есĕр Мерањре Троцкипе тĕл пулассине мĕнле организациленĕ пулнă?

Крестинский. Епĕ çула майлă темиçе кунлăха Берлинра пултăм. Берлинра пирĕн троцкисла етем Бессонов Советникре ларнă, унăн Троцкипе çыхăну пулмала пулнă, мĕншĕн тесен, вăл унчухне, 1933 çулти май уйăхĕнче Берлина кайнă чухне, епĕ ăна çак çыхăнăва тума хушрăм.

Епĕ Кисингенре пулнă чухне ман пата Бессонов телефон тăрăх, Меранре тĕлпулу пулать, тесе пĕлтерчĕ. Троцкий Меране октаберĕн 10-мĕшĕ тĕлнеле Седовпа пĕрле килчĕ. Троцкий хăй француз паспăрчĕпе килни çинчен мана каларĕ, Бессонов кăтартнă маршрут тăрăх килнĕ, Франципе Итали чикки урлă килнĕ, Швейцарипе Германи чикки урлă килмен. Епĕр Мускавра шухăшланă шухăшсем Троцкишĕн пит те паллă пулнă, вăл çак ыйтусем тăрăх хăйĕн кăтартăвĕсене калама тытăнчĕ. Епĕр 1929 çултанпа заговорла организаци тăвасси çине куçрăмăр, влаçа вăйпа çеç хамăр алла илме пултаратпăр, анчах пирĕн заговорла организаци хăй нимĕнле переворот тума пултараймастпăр, терĕ вăл. Çавăнпа та ку тĕлĕшпе мĕнле те пулин буржуалă çĕршывпа килĕшӳ тумала, çакнашкал килĕшӳн пуçламĕшĕ епĕр рейхсверпа тунă килĕшӳ пулать, тесе каларĕ вăл. Анчах ку килĕшӳ икĕ сăлтав тăрăх троцкиссемшĕн те, Германишĕн те çителĕклĕ мар. Пĕрремĕшĕнчен, ку ĕçри пирĕн контрагент рейхсвер çеç пулать, Германи правителстви хăй мар.

Иккĕмĕшĕ, епĕр рейхсверпа тунă килĕшӳн шухăшĕ мĕнре? Епĕр вĕсенчен укçа илетпĕр, вĕсене, ССР Союзĕ çине вăрçăпа тапăннă чухне кирлĕ шпионла информацийе паратпăр. Германи правителствине, уйрăмах Гитлĕра, колони, територи кирлĕ, ăна шпионла информаци çеç мар. Вăл колонишĕн, территоришĕн Англине, Америкăна, Франципе хирĕç кĕрешме Совет Союзĕн территорине илсен çеç çураçма пултарать. Пире 250 пин Германи марки кирлĕ, влаçа хамăр алла илме Германин хĕçпăшаллă вăйĕ кирлĕ, хамăрăн ĕçе çак йенĕпе туса пымала. Çак ĕç вăл—тăван çĕршыва пăрахса, влаçа троцкиссем алла илме, Хĕрлĕ Çара çĕнтерме йутçĕршывăн хĕçпăшаллă вăйĕпе усă курасси çинчен килĕшӳ туни пулать те.

Анчах, калăпăр, Германи Совет Союзĕ çине тапăнсан та, епĕр хамăрăн шалти вăйсене ку тĕлĕшпе хатĕрлемесен влаç аппаратне алла çавăрса илме май пулмасть.

Анчах троцкиссем хăйсем çакнашкал организаци тума нумай хисеплĕ мар тата вăйла та мар. Хулара та йалта та вак буржуазипе кулаксем çине тайăнмала, вĕсемпе чи малтан сылтăммисем çыхăну тытаççĕ. Йулашкинчен организацин Хĕрлĕ Çарта тĕрек пулмала, командирсем хушшинче тĕрек пулмала, çапла тунипе пĕрлешӳлĕ вăйсемпе кирлĕ пунктсене туртса илмеле, влаçа алла илмеле. Çакăнта пирĕн умма задачă тухса тăнă. Пĕрремĕшĕнчен, йутçĕршыв правителствисемпе килĕшӳ тумала, иккĕмĕшĕнчен—Совет Союзĕнче троцкиссен, сылтăммисен тата çар заговорщикĕсен вăйĕсене пĕрлештермеле.

Сылтăммисем çинчен, вĕсемпе организацилĕ çыхăну тытасси çинчен каласа, Троцкий Рыковпа, Бухаринпа, Томскипе çеç чарăнмала мар, вĕсене сылтăммисен çулпуçĕ тесе йышăнна пулсан та, вĕсем хăйсене çителĕклипех шанчăксăра кăларнă, çыхăну тума Рудзутакпа усă курмала, вăл нумай çул хушши совет правителствинче ларнă, вăл партипе мĕнле те пулин ыйту тăрăх хирĕçни паллă пулман, çавăнпа та ун çине тимлĕх хумала, унпа çыхăну тытмала.

Çартă заговорщиксем çинчен калас пулсан, Троцки пĕр çын йатне — Тухачевский йатне çеç асăнчĕ. Ун çинчен вăл авантюрисла, çарта çеç мар, çарта тата политикăра паллă вырăнта тăма йуратакан çын, вăл нимрен иккĕленмесĕрех пирĕнпе пырать, тесе каларĕ.

Малала Троцкий террора, сăтăрла ĕçе, диверссине сарас. и çинчен каларĕ. Вăл диверсилĕ тата террорла ĕçсене Хĕрлĕ Çар оборонине аркатассине, переворот вăхăтне правителствăна патраштарса йарассине вăрçă вăхатĕнче сарма кирлĕ, тесе каларĕ. Кунсăр пуçне çак диверсилĕ, террорла ĕçсем ăна, Троцкине, йутçĕршыв правителствисемпе калаçнă чухне пысăк шанчăк пама пултарнă пулĕччĕ, мĕншĕн тесен вăл унăн йенче тăракансем Совет Союзĕнче кирлĕ таран вăйлă, кирлĕ таран активлă, тесе калама пултарĕччĕ.

Нимĕççемпе калаçасине вăл хăй çине илчĕ. Вăл каланă йапонцăсен вăйĕ çинчен калас пулсан, вĕсемпе тӳрех çыхăну тытма ăна халĕ йавăр, вĕсемпе Мускавра калаçмала, йутçĕршыв ĕçĕсен халăх комиссариатĕнче ĕçлекен, хĕвелтухăçĕнчи ĕçсемпе ĕçлекен Сокољниковпа усă курмала, терĕ вăл. Вăл çак установкăсем çинчен, уйрăмăн илсен, йапонцăсемпе çыхăну тытасси çинчен вăл Пйатакова калама хушрĕ. Кунсăр пуçне вăл мана Пйатаков Рудзутакпа тата Тухачевскипе калаçнипех чарăнмала мар терĕ, мана вĕсемпе курнăçса калаçма хушрĕ, мĕншĕн тесен, епĕ Троцкипе хам тӳрех калаçни, хам мĕнле шухăшлă пулни çинчен каласа пама пултарнă. Çакăнпа епĕ хам Троцкипе Меранре тĕл пулни çинчен каласа пĕтеретĕп.

Манăн, епĕ хам чикĕлешйĕнчен таврăннă хыççăн, мĕн туни çинчен каласа памала. Чикĕлешйĕнчен таврăнсан хам Троцкипе курса калаçни çинчен Пйатаковпа Розенгољца каласа патăм. Пйатаков Тухачевскипе тата Рудзутакпа калаçса илчĕ. 1934 çулти феврањ уйăхĕнче епĕ Тухачевскипе, Рудзутакпа курса калаçрăм, Троцкине мĕн çинчен калаçнине каласа патăм. Иккĕшĕнчен те йутçĕршыв правителствисемпе килĕшӳ тăвасси, вĕсем пире хĕçпăшаллă вăйпа пулăшма пулни, пулас вăрçăра Совет Союзне çĕнтермеле тăвасси, ССР Союзĕнче пĕрлешӳлĕ организаци тăвасси пирки килĕшӳ илтĕм. Вĕсем малала ĕç принципра мар, хамăрăн вĕсене пĕлессинче, тесе каларĕç. Çакăн хыççăн, ССР Союзĕнчи троцкисла организацин паллă представителне—Пйатакова татаклă ответ пулать терĕç.

Ĕçе туса пĕтерни, килĕшӳ туни çинчен Пйатаковран хыпар иличченех епĕ Наркоматра контрреволюцилĕ выступлени пулас мĕн пулсан, епĕ кам çине тайăнма май пуррине палăртма, çынсене суйласа илме тытăнтăм.

1935 çулăн пуçламĕшĕнче Пйатаков мана калаçса татални пур, тесе каларĕ, епĕ ĕнер кăтартса панă центр йатне асăнчĕ, манăн тата Розенгољцăн, центр составне кĕмесĕрех, вăл йертсе пынипе пулас правителствă аппаратĕнче камсем ĕçлессине палăртас тĕлĕшпе ĕçлемели çинчен пĕлтерчĕ. Ку—ĕçе пайлани пулнă. Пире ку ĕçре сылтăмрисенчен Рудзутакпа тата Тухачевскипе çыхăнмали çинчен кăтартса панă. Халĕ ĕнтĕ, выступлени вăхăчĕ çинчен Меранре Троцкипе тĕл пулса калаçнă вăхăтран вара выступлени вăрçă вăхăчĕ тĕлне пулать, тесе шутланă, çавăнпа та епĕр кунта, Совет Союзĕнче, Тухачевский выступлени вăхăтне хамăр тĕллĕн палăртман. Ку ĕç манăн тата Розенгољцăн пулнă:

(Пулăшши 3-мĕш страницăра).

*) Кĕскетнĕ стенограммă.

*) Кĕскетнĕ стенограммă.

Совета хирĕçле „сылтăмла-троцкисла блок“ процесĕ

Айăпланакан Крестинскине иккĕмĕш хут допрос туни

(Йулашки. Пуçламăшĕ 2-мĕш страницăра)

епĕр Тухачевскипе, Рудзутакпа, Рыковпа çыхăннă, анчах пысăк политика, тата выступлени вăхăчĕн ыйтăвĕсем тăрăх Пйатаковпа калаçнă. Епĕр вăрçă йуçланасса кĕтнĕ, Совет Сойузĕ çине тапăнасса кĕтнĕ. Пйатакова, Радека арĕсленĕ хыççăн, Бессонов Берлина карĕ, вăл кайнипе усă курса епĕ, Розенгољцпа тата Рудзутакпа килĕшни тăрăх, Троцкине: троцкиссене нумай арĕсленĕ, çапла пулин те совета хирĕçле тĕп вăйсене—троцкиссене, сылтăмрисене, çар заговоршчикĕсене тĕкĕнмен, вĕсене çапса аркатман, выступлени пулма пултарать, çакна тума центăрăн йутçĕршывсенç Совет Сойузĕ çине тапăнтарассине васкатмала, епĕр лару-тăрува çапла хаклатпăр, тесе пĕлтерме каласа йатăм. Ку вăл 1936 çулти октябĕр уйăхĕнче пулнă. 1936 çулти нойабĕр уйăхĕн вĕçенче Советсен Чрезвычайлă 8-мĕш Сйесĕнче Тухачевский манпа хумханса калаçрĕ. Вăл çапла каларĕ: ĕçсем арканасси пуçланчĕ. Троцкиссемпе сылтăмрисене çĕмĕресси малала пырать пулмала. Вăл вывод турĕ: интервенци пуласса кĕтме çук, хамăран ĕçе тытăнмала. Тухачевский хăйĕн йачĕпе çеç мар, çавăн пекех контрревољуцилĕ çар организаци йачĕпе каларĕ. Епĕ Розенгољцпа калаçса илтĕм, кун хыççăн Розенгољцпа калаçрăм та Тухачевский тĕрĕс калать, ĕç чăтма пултараймасть, тесе вывод турăмăр. Троцкирен ыйтса пĕлме йышăнтăмăр. Дипломатилĕ почтăпа епĕ Троцки патне Бессонов урлă çыру йатăм. Çырура сăмах пирĕн шалти выступленине вăрçăпа çыхăнтармали çинчен пынă. Епĕ выступленине васкатма хушрăм. Маншăн çакăн пек выступлени чухне совет халăхĕнчен переворотăн чăн-чăн тĕллевне пытарма кирли паллă пулнă. Епĕр ССР Сойузĕнче капиталисăма кайала тавăрасшăн, буржуалă государствăсене ССР Сойузĕн территорине парасшăн пулнă, епĕр кун пирки йутçĕршывсемпе килĕшсе таталнă. Кун çинчен совет халăхне уççăн калама пирĕн хăйуллăх çитмен. Епĕ Троцкий умне пирĕн халăхпа çар патне чĕнсе çырмала, унта переворотăн тĕп шухăшне каласмар, тесе ыйту лартрăм.

Ку çырува Бессонов Троцкий патне йанă. Троцкий хăй кунпа килĕшни çинчен ответ пачĕ.

Вышинский. Ответ илтĕр и?

Крестинский. Ку ответа декабĕрĕн вĕçĕнче йе йанварĕн пуçламăшĕнче илнĕ пулмала. Троцкий хăй пуçарнипех выступленине васкатасси çинчен ыйту лартнă, ку кăтартăва вăл çырупа Розенгољц патне йанă пулнă. Çак ответа илнĕ хыççăн, выступленине тӳрех хатĕрленесси пуçланса карĕ.

Февралĕн пуçламăшĕнче епĕ тата Розенгољц центра кĕнĕ. Нойабĕр уйăхĕнче Розенгољцăн, манăн, Гамарникăн троцкисла организацине йертсе пырассине хамăр çине илме тиврĕ. Пйатаков пулман, Радек та çавах. Пирĕн Тухачевскипе, Рудзутакпа калаçма тиврĕ, пирĕн Троцкипе тӳрех çыру çырса илме тиврĕ. Кун хыççăн пирĕн Розенгољц хватерĕнче канашлу пулчĕ. Çак канашлура выступлени вăхăтне, майăн иккĕмĕш çур уйăхĕнче палăртнă. Анчах майăн пуçламăшĕнче Тухачевский Лондана кайман и палăрчĕ. Ку вăхăт тĕлне Вăçам Азирен Рудзутак таврăнчĕ. Кун хыççăн Тухачевский Лондана кайманни, вăл çак выступленице майăн пуçламăшĕнче тăвасшăн пулни палăрчĕ.

1935 çулта манăн Мускаври парторганизацин виçĕ ответлă работникĕпе çыхăну пулнă, вĕсем вăртăн троцкиссем — Посталовский, Фурер тата Корытный пулнă. Епĕ вĕсемпе çыхăнтăм, выступлени çывхарса çитет, арĕслемели, ĕçрен кăлармали Мускаври çынсен, çав пушаннă вырăнсене лартмали çынсен спискине вĕсем тума кирли çинчен калярăм. Майăн 20-мĕшĕ тĕлне епĕ çав спискăсене илмеле пулнă. Анчах майăн малтанхи чисписенче контрревољуцилĕ организацине аркатас ĕç пуçланчĕ. Выступлени пулма пултарайманни паллă пулчĕ. Çакăн хыççăн, тепĕр темиçе кунран мана арĕслерĕ.

Тухачевскийпе тĕл пулнă чухне вăл контрревољуцилĕ выступлени тăвиччен хăшпĕр терроризм ĕçсем тума хушрĕ. Тухачевский террорла ĕç тума хушнă пирки епĕр килĕшмерĕмĕр, террориссене—ĕç тăвакансене ăна паратпăр, тесе калярăмăр. Гамарник манăн та террорла ĕç тăвакансем—кадровиксем пур, терĕ.

Вышинский. Нумайччен иккеленсе тăнă хыççăн, судра хирĕçӳле зайавленисем панă хыççăн, халĕ есĕр хăвăрăн айăпна йышăнаттăр-и?

Крестинский. Йышăнатăп.

Процес дневникĕ

Мартăн 8-мĕшĕнчи каçхи лару

ССР Сойузĕнчи Верховнăй Суд Çар Коллегийĕн мартăн 8-мĕшĕнчи каçхи ларура судпа айăпланакан Буланова, айăпланакан Йагодăн личнăй секретарĕ пулса ĕçленĕскерне, допрос тунă. Буланов унăн шанчăклă тарçи тата йултăшĕ пулнă, Йагода та ăна „сылтăмла-троцкисла блокăн“ заговорла ĕçне хутшăнтарнă.

Буланов каланинчен çакă курăнать: заговоршчиксем малтанах хăйсем хушшинче государствăлă вырăнсене валеçнĕ. Йагода хăйне Халăх Комиссарĕсен председателĕ пулма палăртса хунă, Енукидзене заговоршчиксем Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателĕ пулма палăртса хунă, Тухачевскине—оборонă комиссарне лартма палăртнă. Бухаринпа Рыкова сылтăмла-троцкисла бандă парти Тĕпкомĕн секретарĕсем тума палăртса хунă, Бухарин çинчен Йагода çапла каланă: „Вăл ман патра Геббељсран кайă пулмасть“,—тенĕ. Булановпа калаçнă чух Йагода „сылтăмла-троцкисла блокпа“ Германипе Йапони фашисĕсем хушшинче килĕшу туса хуни çинчен асăннă. Йутçĕршывра пурăнакан Троцкий патне йама Йагода темиçе хутчен те государствă укçи-тенкисенчен, йутçĕршывсенчи укçа хакĕпе шутласа Буланова нумай (20-шер пин доллар панă.

Малашне Буланов Йагодăн службă йенĕпе тунă преступленисем çинчен каласа кăтарать. ОГПУ—НКВД руководителĕн ĕçĕнче пулса тăван çĕршыва парахса, тăшмана сутăнакан Йагода хăйĕн кӳтипе контрревољуциле заговоршчиксене ĕрчетсе пынă. Вăл троцкиссене, зиновйевцăсене, меньшевиксене, тĕрлĕ тĕслĕ сылтăм бандитсене пытарса усранă. Арĕсленĕ сылтăмла-троцкисла бандитсене, вĕсене допрос тунă чух хăйсене мĕнле тытмали çинчен хăй каласа ăнлантарнă: çакăн пек пулнă та Угланова, Фрейцера тата И. Н. Смирнова арĕсленĕ чух. Шалти Ĕçсен Халăх Комиссариачĕн аппаратĕнче Йагода шпионĕсен йăвине çавăрнă. Буланов Шалти Ĕçсен Халăх Комиссариатĕнче ĕçленĕ работникĕсем хушшинче Германи шпионĕсем пулса ĕçленĕ çынсен йачĕсене темĕн чухлех каласа парать.

Булановпа калаçнă чух Йагода хăй Сергей Миронович Кирова вĕлерме хатĕрленине пĕлсе тăни çинчен пĕлтернĕ. Малашне Йагода Максим Горькине, Куйбышева, Менжинскине тата М. А. Пешкова (А. М. Горькин ывăлне) вĕлерес ĕçе организацилени Буланова паллă пулнă.

Буланов хăй Н. И. Йежова вĕлерме тапăнни çинчен тĕплĕн кăтартса парать. Тискер Йагода Йежов йулташ хватерне, наркăмăшла йапала (йад) сапратнă, вăл йад Йежов йулташăн сывлăхне пĕтермеле пулнă. Йежов йулташа Шалти Ĕçсен Халăх Комиссарне лартсан, Буланов Йагода хушнă тăрăх Нарком кабинетне темиçе хутчен те çынна вĕлерекен йапалапа сапа-сапа тухнă.

Суд Йагодана допрос тума пуçлать.

Судра тупса палăртнă фактсем тăрăх Йагода хăй тунă преступленисене йышăнать. Вăл сылтăмрисен контрревољуциле организацинче 1928 çултанпах тăни çинчен суда кăтартса парать.

Йагода çапла каласа пĕлтерет: вăл тăван çĕршыва парахса тăшмана сутăнчăкла ĕçе туса пынипе кăна „сылтăмла-троцкисла блок“ хăйĕн контрревољуциле ĕçне вăрăм вăхăт хушши туса пыма май килнĕ. ОГПУ—НКВД аппаратĕнче йертсе пыракан должнăçсене Йагода хăйĕн йулташĕсене лартса тухнă. Вĕсенчен хăшпĕрисем йутçĕршыв разведкисен службинче „совместителствăпа“ ĕçлесе тăни ăна паллă пулнă; вăл çавсен шпиона ĕçне витсе тăнă.

Йагода „сылтăмла-троцкисла блок“ задачисемпе ĕç меточĕсем çинчен татăклăн, сиввĕн, вăтанмасăр каласа парать. Çав задачăсем совет влаçне сирпĕтсе антарса тата партипе правителствă руководителĕсене вĕлерсе пĕтерсе, ССР Сойузĕнче капиталисăма кайала тавăрасси çинчен пулнă.

Айăпланакан çапла каласа пĕлтерет: сылтăмла троцкисла бандăн терроризм актисем пурте „сылтăмла-троцкисла блок“ центрĕ тӳрĕмĕн кăтартса пани тăрăх пурнăçа кĕртсе пынă. Çав решенисене туса йышăннă çĕрте Рыковпа Бухарин хутшăнса ĕçленĕ. Çав решенисемпе килĕшнĕ май, Сергей Миронович Кирова вĕлернĕ, Максим Горькине, Куйбышева, Менжинскине тискеррĕн вĕлернĕ.

Каçхи ларура йулашкинчен айăпланакан Крючкова, М. Горькин секретарĕ пулса ĕçленĕскерне, допрос тăвăççĕ. Судпа айăпланакан Горькин ывăлне Максим Пешкова усалăн вĕлернĕ çĕрте тӳрĕмĕнех хутшăнса ĕçленине йышăнать, ун хыççăн—аслă писателе хăйне вĕлернĕ çĕрте пулни çинчен те йышăнать. Вăл çав икĕ çынна хăрушшăн та тискеррĕн вĕлерессине йепле организацилени çинчен тĕпĕ йĕрĕпе каласа кăтартать. Çакна май çак бандит М. Горький шанса панине вăл йепле улталани çинчен, унăн укçи-тенкисене салатса пĕтерни çинчен, унăн çемйинче йепле ирсĕр хирĕçӳсем каларса пыни çинчен калать.

Крючков хăйĕн „сылтăмла-троцкисла блок“ çумне политикăла хутшăннине йышăнать.

Мартăн 9-мĕшĕнчи ирхи лару

Мартăн 9-мĕшĕнчи ирхи ларура суд Менжинский, Куйбышев, Горький тата М. Пешков йулташсене тискеррĕн вĕлернипе тата Н. И. Йежов йулташа вĕлерме тăнипе çыхăнса тăракан пӳр сăлтавсене те тупса палăртса пычĕ.

Судра айăпланакан Плетнева допрос тăвăççĕ, вăл „сылтăмла-троцкисла блок“ решенийĕ тăрăх, терроризм актсене пурнăçа кĕртнĕ çĕрте тӳррĕмĕнех хутшăнса ĕçленĕ.

Плетнев вăл—Совет влаçĕн тискер тăшманĕ, иртнĕ вăхăтра кадет пулнă, унăн шухăшĕсем совета хирĕçле пулнине вăл суд умĕнче йышăнать. Анчах та, хăйĕн совета хирĕçле шухăшсене Плетнев пытарса усранă, хăйне тӳрĕ кăмăллă совет гражданинĕ пек кăтартма хăтланнă.

— Маскăпа витĕнсе пурăнтăр?—ыйтать Вышинский йулташ.

— Çапла,—ответлет Плетнев.

— Икĕпитлентĕр?

— Çапла.

Çавăнпах та ĕнтĕ Плетнев совет влаçне хирĕç ăнланса илсех кĕрешекен тăшман, ăна Йагодана суйласа илме тӳр килнĕ, лешĕ вара сылтăмла-троцкисла заговорла бандăн пуçлăхĕсем—Троцкий, Бухарин, Рыков, Томский—хушнипе ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн Политбӳро членĕсене хирĕç, советăн паллăран та паллă деятелĕсене хирĕç терроризм актсене организацилекенни пулнă.

Плетнев кам пулса тăнине Йагода пĕлнĕ тата унăн çине пысăк шанăçсем хунă. Вăл ăна хăй патне чĕнсе илнĕ, совета хирĕçле заговорăн тĕлĕнмеле хăрушă ĕçĕсем çинчен каласа панă, ăна преступлениле ĕçсем тума хушнă, Плетнев вара, шутласа тăмасăрах вăл хушнисене пурнăçа кĕртме васканă.

Хăйĕн „медицинă тĕлĕшĕнчи авторитечĕпе“ усă курса, Горькин „килти врачĕпе“ Левинпа пĕрле Алексей Максимовича тискеррĕн вĕлермели план тăвать, унăн хăрушла результатне туса çитерет.

Чиртен сыватас ĕçре сăтăрçăла методсемпе усă курса, Плетневпа Левин темтепĕр хăтланса аслă писателĕн ахаљ те начар сывлăхне татах начарланма пулăшаççĕ, организăм чирпе кĕрешессине май килнĕ таранах чакарас тĕлĕшпе мĕн тумалине йăлтах тăваççĕ, вĕсем ирсĕр шут тытса медицинăри вăйлă имçамсене Горькине виçерен пысăклатса параççĕ. Вара Горький вилет.

Плетневпа Левин, сылтăмла-троцкисла бандитсен тĕлĕнмеле ирсĕр шухăшне пурнăçа кĕртсе, çавăн пекех Куйбышева тискеррĕн вĕлереççĕ.

Плетнев, преступленин пур йĕрĕсене те пытарнă, никам та нимĕн те пĕлес çук, тесе шутланă. Вăл, чăннипе илсен, бандитла тĕнчен сăлтарĕ пулса тăнăскер, йаланхи пекех медицинăн „çутă сăлтарĕ“ пулса тăрăп, тесе ĕмĕтленнĕ.

Айăпланакан Плетневăн ирсĕр ĕçĕсем тепĕр айăпланаканăн—ирхи ларура допрос тунă Казаковăн ĕçĕсемпе те тачăн çыхăнса тăраççĕ.

Казаков совет сучĕ умĕнче ОГПУ руководителне Менжинскине тискеррĕн вĕлернĕшĕн ответ тытать. Ăна вăл Йагода панă кăтарту тăрăх тунă.

Хăй вăхăтĕнче Казакова, вăл хăй каланă тăрăх, Лизатотерапи тĕлĕшпе ĕçлемешкĕн ССР Сойузĕнчи чи лайăх аслăлăх институтне пана пулнă. Ăна пысăк средствăсем парса тăнă, пысăк усалă аслăлăх ĕçĕ тумашкăн пур условисене те туса панă. Анчах Казаков совет влаçне намăссăрăн, ирсĕррĕн улталанă.

Çак авантурис, иртен çӳрен—Йагода—Бухарин шайкинчи бандитсемшĕн „пит те усалă материал“. Вăл лизатсене туса хатĕрлемели меслене çирĕп пытарса усранă. Йагода пулăшнипе Казаков, вăл хăй йышăннă тăрăх, аслăлăх карйери тума, хăйне хирĕç çынсене „хĕссе хума“ ĕмĕтленнĕ. Авантюрис та иртен-çӳрен, чекис Менжинскине хирĕç шухăшласа хунă заговора пурнăçа кĕртме хатĕрĕнех тытăнать.

Хăй тунă йăвăртан та йăвăр усал ĕçсене йышăнса, йулашки вăхăтра Казаков, çапах та, хăй панă хăшпĕр кăтартусене тĕрĕс мар, теме хăтланать. Вăл калать: епĕ Менжинскине чиртен сыватнă чух усă курнă лизатсем сийенсĕр пулнă, тет. Кун пирки Вышинский йулташ експертизăна чылай ыйтусем парать. Перерыв хыççăн, государствă йенчен айăплакане панă ыйтусем пирки панă ответсене медицинă експертизи хут çине çырса суд аллине парать. Вăл çакна палăртса парать: Менжинский чĕрен йăвăр чирĕпе асапланнă пулнă, çавăн пек чухне çав кăтартнă лизатсемпе усă курма йураман. Ку çапла иккенне Казаков пĕлмесĕр тăма пултарайман.

Вышинский йулташ çавăн пекех тата Казаков малтанхи следствире хăй панă кăтартусене вуласа парать, вара тăрă шыв çине кăларнă тăшман хăй суд умĕнче çыпăçусăр суйма хăтланнине йышăнать.

Йулашкинчен айăпланакан Максимов—Диковскине допрос тăваççĕ. Вăл Куйбышева вĕлернĕ çĕре хутшăннă пулнă.

Вăл хăй совета хирĕçле „сылтăмла-троцкисла блокра“ тăнине, унăн сутăнчăклă планĕсене пĕлсе тăнине суд умĕнче йышăнать. Максимов—Диковский сылтăмрисемпе 1928 çултах çыхăннă, парти умĕнче икĕпитленсе, пур тĕрлĕ майсемпе те усă курса хăйĕн чăн-чăн сăнпитне пытарса усранă. Вăл Куйбышев секретариатне ĕçлеме хĕсĕнсе кĕнĕ. Йагода Куйбышев йулташа тискеррĕн вĕлерме панă заданине Левинпа пĕрле пурнăçа кĕртсе пынă.

Максимов—Диковскине допрос тунă хыççăн, суда свидетел Белоцкий тухтăр кăтартусем парать, Алексей Максимович Горькине тĕрĕс мар емеллени çинчен хăй пĕлекен фактсене каласа парать.

Аслăлăхăн тава тивĕçлĕ деятелĕ Д. А. Бурмин профессор експертиссем йышăннине вуласа парать. Ун тăрăх çакă курăнать: Менжинскине, Куйбышева, М. Горькине тата М. Пешкова чиртен сыватас ĕçе сăтăрлă меслепе, тискеррĕн вĕлерес йенпе туса пынă. Експертизă çавăн пекех тата çакна çирĕплетсе парать: Н. И. Йежов кабинетĕнчи йапаласене тата сывлăша анализ туса пăхнă тăрăх, çакна палăртнă: Йагодăпа Буланов вĕлерекен йапаласем пырса сапнине пула, Н. И. Йежов сывлăхне чылайах пысăк сийен кӳнĕ, унăн пурнăçĕ умĕнче тӳррĕмех вилĕм хăрушлăхĕ пулнă.

Вышинский. Çав ыйтусем çине панă çак ответсем пĕтĕм експертизă пĕр шухăшлăн панă ответсем пулса тăраççĕ-и, йе експертиссенчен кам та пулин ку ĕç çине хăйне уйрăм урăхла пăхать и?

Профессор Бурмин. Пурте çапла пăхаççĕ.

Суд пăхса тухнин материалĕсем судпа айăпланакансен тенкелĕ çинче ларакан фашисла бандитсен кашнин ирсĕр сăн-питне кирлĕ пек туллин уçса пачĕç. Анчах государствă йенчен айăплаканĕ Розенгољц сăн-питĕнче тата тепĕр интереслĕ йĕр тупнă. Арĕсленĕ чухне Розенгољцăн кăсйинче хаçат татăкĕпе чĕркесе хунă пĕчĕкçĕ çăкăр татки тата... кĕл тумалли сăмахсем çырса хунă хут татăкĕ тупнă пулнă. Çав çемйе „талисманне“ Розенгољца арăмĕ, арĕсличчен темиçе уйăх малтарах панă пулнă.

Вышинский йулташ, вăл „талисман“ мĕне пĕлтерет тесе ыйтсан, Розенгољц, епĕ ăна „телей пултăр“ тесе илсе çӳретĕп, тенĕ.

16 сехетре судăн ирхи ларувĕ пĕтет. Суд председателĕ Ульрих йулташ, судăн ситтĕс ларувĕ хупăн пулса иртет, тесе пĕлтерет.

(ТАСС).

Уборщицăран—станок çине

Катыршевă Раисă— Канашри вагонсем йусакан завода пырсанах пĕр çул хушши механически цехра уборщицă пулса ĕçленĕ. Çав хушăра вăл кашни станокпа мĕнле ĕçленине тĕплĕн сăнаса тăнă. Работницăсем ĕçленине курсан, унăн та станок çинче ĕçлес хавасăх ӳснĕ.

Пĕр çул ĕçлесен цехри администраци Раисăна сверилљнăй станок çинче ĕçлеме куçарнă. Ĕçленĕ вăхăтрах вăл çине тăрса вĕренет. Хăйĕн ĕç техники çинчен калакан кĕнекесем журналсем вулать. Анчах малтанхи вăхăтсенчех вăл хăйне панă плана тултарайман. Унăн час-часах станок чĕнĕсем татăлса кайнă. Кайарахпа ку кăлтăксем те пĕтеççĕ. Ĕç çине кăмăлтам йуратса пăхнипе тата станокпа лайăх ĕçлеме вĕренсе çитсен, Раисă хăйне панă плана ытлашшипех тултарса ĕçлеме пуçлать, стахановка пулать. Йулашки уйăхсенче вăл плана 200—300 процент таран тултарса ĕçлеме пуçларĕ.

Раисă цехри работницăсем хушшинче активискă пулса тăрать. Ăнланман ыйтусем пулсан работницăсем унтан ыйтса пĕлеççĕ.

Раисă 1935 çултанпа „Механизатор“ хаçатăн редколлеги членĕнче тăрать. Унта та активлăн ĕçлет. Халĕ унăн лайăх ĕçне хаклаха, постройком ăна канмали çурта йарать. Катыршева Раисă заводра 1934 çултанпа ĕçлет.

Тунă йăнăшсене бољшевикла тӳрлетер

Парти организацисен коммунисене партирен кăларнă чухнехи йăнăшĕсем çинчен, партирен кăларнисен апелљацисем çине формаљнă-бӳрократла пăхни çинчен тата çав çитменлĕхсене пĕтермели майсем çинчен ПСК(б)Парти Тĕпкомĕн йанварти Пленумĕ йышăннă постановленийĕ партин кашни организацийех тунă йăнăшсене хăвăртрах тӳрлетме хушать. Партин уйрăм членĕсен кун-çулĕ çинчен тăракан ыйту çине, парти членĕсене партирен кăларасси çинчен, йе партирен кăлармала тăвасси çинчен тăракан ыйтăва татса панă чухне ытларах сыхăлăхлă пулма, йулташла тăрăшса пăхма кирли çинчен ПСК(б)П Тĕпкомĕпе Сталин йулташ парти организацисене темиçе хутчен те асăрхаттарнă. Анчах та партин хăшпĕр организацийĕсем партирен кăларнисен апелљацийĕсем çине формаљнă, чунсăр, бӳрократла пăхни сахал пулман.

ПСК(б) Парти Тĕпкомĕн йанварти Пленумĕ иртнĕренпе партколлеги 67 апелљаци пăхса тухрĕ. Çак апелљаци панă коммуниссенчен нумайĕшне: „халăх тăшманĕсемпе çыхăну тытаççĕ, йе вĕсен тăванĕ-хурăнташĕсем судпа айăпланнă“, тесе партирен кăларнă.

Халăх тăшманĕсемпе çыхăну тытса, вĕсене пытарса пурăнакансене, халăх тăшманĕсене пулăшса пыракансене парти ретĕнчен кăларнине çирĕплетсе, партирен тĕрĕс мар кăларнă çак йулташсене партколлеги парти ретĕнчех хăвармала турĕ:

Мигушинăна (Хĕрлĕ Чутай районĕ) халăх тăшманĕсемпе çыхăну тытать, хăйĕн упăшкине, халăх тăшманне, тăрăшыв çине кăларман, тесе парти ретĕнчен кăларнă. Мигушина йулташ çирĕм çула йахăн учителницă пулса ĕçлет, вăлах парти райком инструкторĕ те пулса ĕçленĕ. Халăх тăшманĕсене тăрă шыв çине кăларса ответ тыттарассипе районри организацисене пулăшса пынă. Унăн упăшки халăх тăшманĕ мар, хаљхи вăхăтра Горький хулинчи автозаводра ĕçлет. Кузнецова йулташ 1916 çултанпа учителницă пулса ĕçлет. Ăна халăх тăшманĕсемпе çыхăну тытать, тесе партирен кăларнă. Кузнецова йулташăн мĕнле çыхăну пулнă-ха? Кузнецован йăмăкĕ халăх тăшманне качча тухнă пулнă, вăл хăйĕн йăмăкĕ патне сайра хутра кайкаланă, йăмăкĕ те ун патне сайра хутра пынă. Ие тата акă Серебрйаков Кирил. Вăл Мускавпа Хусан хушшинчи чукун çул çинчи рабочи. Ăна та халăх тăшманĕпе çыхăну тытать, тăшмансене тăрă шыв çине кăлармасть, тесе партирен кăларнă. Ăна партирен мĕншĕн кăларнине тĕплĕн тĕрĕслесе пăхсан, акă мĕн курăнчĕ: Серебрйаков йулташ ĕçĕ çинчен характеристикă паракан халăх тăшманĕ пулнă. Хăй çинчен характеристикă кам панине Серебрйаков йулташ пĕлмен. К. Серебрйакова партирен кăларсанах унăн шăлнĕ, Серебрйаков Ивана та: „Ĕсĕ тăванупа, К. Серебрйаковпа, çыхăну тытăгăн, ăна хӳтĕлетĕн“ тесе парти ретĕнчен кăларса пăрахнă.

Иварбейев йулташа (Елĕк райĕçтăвком председателĕ) „Вырăнти крайа вĕренмели обшчествăра“ тăнă, буржуалă националиссене тăрă шыв çине кăларас тĕлĕшпе ĕçлемен, райĕçтăвкомра тата йалсовечĕсенче клас тăшманĕсем ĕçленĕ—ăна курман, тесе партирен кăларнă. Иварбейев йулташ ĕçне партколлегинче пăхса тухнă. Чăнах та вăл „Вырăнти крайа вĕренмели обшчествăн“ членĕнче формаљнă тăни палăрнă. Ăна айăпланă ытти „айăпсем“ пĕри те тĕрĕс пулман. Хаљ Иварбейев йулташа парти ретне кайала илнĕ.

Н. Йевдокимов йулташ Канаш бољницинче врач пулса ĕçлет. Парти членĕ. Ăна „Вырăнти крайа вĕренмели обшчествăра“ тăнине уççăн йышăнмасть, суйать, тата бољницăна ача çуратма пынă хĕрарăма, Земцована, бољницăран вăхăтсăр кăларса йанă, тесе формаљнă пăхса партирен кăларнă. Партколлеги Н. Йевдокимов йулташ ĕçне тĕплĕн пăхса тухса, ăна парти ретĕнчех хăварчĕ. Магера Çапукова йулташа (Шăнкăртам райĕçтăвкомĕн председателĕ пулнă) райĕçтăвком аппаратĕнче политикă тĕлĕшĕнчен шанчăксăр, йăла тĕлĕшĕнчен пăсăлнă çынсене ĕçлеттерне, халăх тăшманĕсене мухтанă, самокритикăна хĕснĕ, районра сăтăрла ĕçсем туса пынă, тесе партирен кăларнă та, ун ĕçне судпа следстви аллине панă. Судпа следстви органĕсем, ĕçе тĕплĕн тĕрĕслесе тухмасăрах, М. Çапукова йулташа тĕрмене хупса та лартнă. Хаљ М. Çапукова йулташа, ун айăпĕ пулман пирки, тĕрмерен кăларнă, парти ретне кайала илнĕ.

Паллах ĕнтĕ, партин хăшпĕр пуçламăш организацисемпе парти райкомĕсем хăйсене страхласа хăварасшăн пулнă, хăйсене политикăла сисĕмлĕхе çухатнă, тесе каласран хăранă. Вĕсем уйрăм коммуниссен кун-çулĕ пирки тарăшман, çавăнпа та çитменлĕхле айăпсăрах партирен кăлара-кăлара пăрахнă.

Коммуниссем панă апелљацисене пăхса тухнипе пĕрлех, партколлеги хăйĕн решенисене те тепĕр хут пăхса тухрĕ. Çапла тепĕр хут пăхса тухса, партирен кăларнă 11 çынран 8 çынна парти ретне кайала илмеле тунă. (Терентйев И., Иванов П. И., Данилов Д. Д., Зотов, Захаров, Глухов т. ыт. те). Д. Д. Данилова халăх тăшманĕсемпе—троцкиссемпе тата буржуалă националиссемпе кĕрешмест, вĕсене пытарса витсе пурăнать, тесе партирен кăларнă. Партколлеги Данилов йулташ ĕçне тепĕр хут пăхса тухнă чухне, вăл хăйĕн йăнăшĕсене йышăнчĕ, малашне лайăх ĕçлесе пырса, тунă йăнăшсене тӳрлетме сăмах пачĕ.

Партколлеги, партирен кăларнисен ĕçĕсене тепĕр хут пăхса тухнă чухне йаланах, коммунис хăйĕн айăпĕсене, йăнăшĕсене мĕнле тӳрлетсе пынине шутра тытнă.

Партколлеги хăйĕн куллентхи ĕçĕнче йаланах Парти Контроль Комиççин 1936 çулхи март уйăхĕнче пулса иртнĕ 3-мĕш Пленумĕн решени тăрăх ĕçлесе пымала. ПСК(б)Партине ултавлă майпа кĕнĕ йут çынсене, пурнăçпа йăла тĕлĕшĕнчен пăсăлса кайнă çынсене хыта айăпласа, парти ретĕнчен хăваласа кăларса йамала. Çавăнпа пĕрлех, хăйсен йăнăшĕсене йышăнса, вĕсене тӳрлетме пултаракан çынсене парти ретĕнчех хăвармала, вĕсене кулленкун бољшевикла воспитани парса вĕренсе çитентерсе пымала.

ПСК(б)Парти Тĕпкомĕн йанварти Пленумĕн решенийĕ партколлегишĕн уйрăманах пысăк вырăнта тăмала, мĕншĕн тесен партколлеги хăй партирен кăларассипе тата пар ирен кăларнисен апелљацийĕсене пăхса тухас тĕлĕшпе ĕçлет. Партколлегине кĕнĕ апелљацисене Тĕпком Пленумĕ кăтарнă срукра пăхса тухмала, волокитă тăвраш пулмала мар.

Коммуниссем панă апелљацисене вăхăтра пăхса тухасси вăл—парти райкомĕсем материала вăхăтра партколлегине тăратнинчен те килет. Хăшпĕр райкомсем партирен кăларнă çынсен материалĕсене 2—3 уйăх хушши тытса тăнисем пур. Тăвай тата Хĕрлĕ Чутай райкомĕсем час-часах çапла тăваççĕ.

ПСК(б)Парти Тĕпкомĕн йанварти Пленумĕн решенийĕ халăх тăшманĕсемпе — троцкисла-бухаринла бандитсемпе, двурушниксемпе, провокаторсемпе хайарран кĕрешсе пыма хушать.

Çавăн пекех карйерис-коммуниссемпе, перестраховшчиксемпе, кăшкăравçăсемпе пĕр шелленмесĕр кĕрешсе пымала.

Партирен кăларнă чухне тунă йăнăшсене хăвăртрах тӳрлетмеле.

Калиновский.

Китайри вăрçă

ÇУРÇĔР КИТАЙРА

ХАҌКОУ, мартăн 8-мĕш. (ТАСС). ШаҌси провинцинчи фронтра пысăк çапăçусем Хоума йатлă чукунçул станци тата Йуҍцуйпа Пинлу хулисем патĕнче (Хуанхе йуханшывĕн çурçĕр çыранĕнче, Хенаҍ провинци чикинче) пулса пыраççĕ.

Китай çарĕсемпе партизанĕсем йапонцăсен тылĕнче пысăк активлăхпа вăрçаççĕ, вĕсем Йапони çарĕсем çине пĕрмайах тапăнаççĕ. Линҍфыҍ тавринче çапăçусем чарăнмаççĕ-ха. Китайцăсем Ҍанмачена (Линҍфынҍрен 70 километр хĕвелтухăçнеле) хăйсен аллинчех тытса тăраççĕ. Датун—Пучжоу чукунçулĕн икĕ йенче те Китай çарĕн чăсĕсем çапăçаççĕ. Кашни кун пулса пыракан çапăçусенче Йапони çарĕсен пысăк çухатусем пулаççĕ.

ХАҌКОУ, мартăн 8-мĕшĕ (ТАСС). Китай çарĕсем Минçаҍ йатлă хула çине (Хенаҍ провинцин çурçĕр пайĕ) атакă тума пуçланă. Сентрал Ҍйус агентствин корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Чжандерен кăнтăрала (Хенаҍ провинцин çурçĕр пайĕ, Бейпин—Хаҍкоу чукунçулĕ çинче) Китай çарĕсене хирĕç вăрçнă чухне февраҍ уйăхĕнче йапонцăсем 30 танк ытла çухатнă, вăл танксем Китай халăхĕ чавса тунă тарăн шăтăксене кĕрсе ӳксе пĕтнĕ.

ЛОНДОН, мартăн 8-мĕш. (ТАСС). „Таймс" хаçатăн Шанхайри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Бейпинран 70 километртра, Китай партизанĕсем Бейпин—Хаҍкоу чукунçул тарахĕнчи çыхăнува çĕнĕрен татнă.

ШАНХАЙ, мартăн 8-мĕшĕ, (ТАСС). Хебейпа Хенаҍ провинцисенче çапăçакан партизансен отрйачĕсем кунран кун пысăк активлăх кăтартса пыраççĕ. Вĕсем Шаҍси провинцине вăрçă хатĕрĕсене тата унта Йапони подкрепленийĕсене йарассине пур майсемпе те чăрмантарса пыраççĕ.

ВĂТАМ КИТАЙРА

ХАҌКОУ, мартăн 8-мĕш. (ТАСС). Китайăн вăтам пайĕнче партизанла йухăм кунран кунах сарăлса тата ытларах та ытларах орҍанизацилĕн пулса пырать. Партизансем пуйăссем тата Йапони отрйачĕсем çине тапăнаççĕ. Вăрçă ĕçĕсем пуçланнă вăхăтран вăра вĕсем унта Сучжоу йатлă хулана икĕ хутчен, Мингуан хулине виçĕ хутчен туртса илнĕ тата Пукоу патне çывхарнă. Партизансем хушшинче Нанкин хулинче пурăнакан халăхсем те нумай, вĕсем Йапонцăсем тискеррĕн вĕлерессинчен тарса пынă.

Йапони çарĕнчи вăрçа хирĕçле выступленисем

ХАҌКОУ, мартăн 9-мĕш. (ТАСС). Гонконгран çапла пĕлтереççĕ: Йапони командованийĕ Йапонин икĕ офицерне—Катопа Нагано офицерсене тата Йапонин Шанхайри çарĕсем хушшинчен çĕр салтак ытла арĕслесе, вĕсене суда панă. Мартăн 3-мĕшĕнче арĕсленисене суд тунă, вĕсене çарта вăрçа хирĕçле ĕç туса пынă,—тесе айпланă. Офицерсемпе салтаксен пурнăçĕ мĕнли паллă мар.

Йапонийе хирĕçле восстанисем

ЛОНДОН, мартăн 5-мĕш. Рейтер агентствин Бейпинри корреспонденчĕ çапла çырать: Суйуаҍрен пынă çынсем Баотоу хулинчен хĕвеланăçнеле Манчжурипе Монголи çарĕсем Йапонийе хирĕçле восстанисем туни çинчен пĕлтереççĕ. Вĕсене Йапони офицерĕсем йертсе пыраççĕ. Çав çынсем каласа ĕнентерне тăрăх, Монголипе Манчжури салтакĕсен пысăк пайĕ Китай йенне тарса кaçнă. Çак хыпарсене Китай правителствин хыпарĕсем те çирĕплетеççĕ.

(ТАСС).

Латви самоҍочĕ ССРС территорийĕ çине вĕçсе каçнă

Кăçалхи февралĕн 23-мĕшĕнче „Код-I" маркăлă икĕ çын лармали спорт аэропланĕ чикĕ урлă ССРС территорийĕ çине вĕçсе каçса, Полоцк округĕнчи, Сиропгинск районĕнчи Пашни йатлă йал таврашне анса ларнă. Кайран палăртнă тăрăх, вăл аэроплан Латвин Ригă хулинчи аероклубĕн пулни палăрнă. Аэроплан анса ларнă чухне пропеллерне хуçса парахнă.

Аэроплана тытса пынă ҍотчик, гр. И. Муземнек, вырăнти влаç органĕсен представителĕсемпе пичет представителĕсене, епĕ Латвирен йурийех вĕçсе тухнă, епĕ унта кайала таврăнмастăп, тесе пĕлтернĕ. (ТАСС).



ЙАЛХУÇАЛĂХĔНЧЕ МАЛТА ПЫРАКАНСЕН РЕСПУБЛИКĂРИ СҌОЧĔН ДЕЛЕГАЧĔСЕМ.

Ӳкерчĕк çинче: (сулахайран сылтăмала) Е. Е. Сидоркин—Вăрнар районĕнчи Коҍцовкăри Сталин йачĕпе тăракан колхозăн бригадирĕ; Б. И. Иванов—Трак районĕнчи Каганович йачĕпе тăракан колхозри опытник; Н. Л. Павлов—Трак районĕнчи „Красное Сормово" колхоз председателĕ; Н. А. Чебуков—Турхан районĕнчи „Совет" колхоз председателĕ; Йа. Н. Андрейев—Сĕнтĕрвăрри р. „Социализм" колхоз председателĕ.

Цыганов фото-ӳкерчĕкĕ.

Сҍот ĕçĕсемпе решенисене ăнлантарса параççĕ

Атнашри Киров йачĕпе тăракан колхозри (Шăхасан р.) республикăри йалхуçалăх ĕçĕнчи стахановецсемпе ударниксен сҍотĕнче пулнă делегатсем (колхоз председателĕ Йакимов, вăйлă тырпул мăçтăрĕ бригадир Степанова Васса, опытник Исайев) мартăн 4-мĕшĕнче республикăри сҍотран таврăнчĕç. Вĕсене колхозниксем пысăк хавасланхпа кĕтсе илчĕç.

Тепĕр кунне колхозри актива пухса Йакимов йулташ сҍотра мĕн çинчен каланисене тата стахановецсемпе ударниксене йалхуçалăх ĕçĕнче тăрăшса ĕçленĕшĕн премисем пани çинчен, хăйсене мĕнпе премилени çинчен, кăçал вăйлă тырпул туса илес тĕлĕшпе мĕн тумалиçинчен тĕплĕн ăнлантарса пачĕ.

Колхозниксем хăйсен колхозĕнчен кайнă делегатсем преми илме тивĕçлĕ пулнăшăн тулли кăмăлпа хавасланса стахановецсен йышне татах йышлататпăр, терĕç.

Мартăн 8-мĕшĕнче Пĕтĕм Тĕнчери хĕрарăмсен Коммунисла кунне иртернĕ май, колхозниксен аслă пухăвĕ пулса иртрĕ.

Пухура республикăри сҍот делегачĕ (колхоз председателĕ Йакимов) сҍот ĕçĕсемпе решенисем çинчен тата 1938 çулхи умра тăракан задачăсем çинчен доклад туса пачĕ.

Йакимов йулташ доклачĕ хыççăн колхозниксем пĕр сасăпах хăйсен колхозĕпе ăмăртăва тухнă Калинин йачĕпе тăракан колхозпа тунă ăмăрту договорне тата йалхуçалăх ертелĕн уставне мĕнле пурнăçланине тĕрĕслес, тесе йышăнчĕç.

Киров йачĕпе тăракан колхозри республикăра пулнă сҍот делегачĕсем сҍот ĕçĕсемпе решенийĕсем çинчен кӳрĕшри колхозсене кайса ăнлантарса параççĕ.

С. Соколов.

Партире тăман активиссене—Ленин-Сталин партине

ССР Сойузĕн Верховнăй Советне суйланă вăхăтра агитаципе пропагандă ĕçне коммуниссем çеç мар, партире тăман боҍшевиксем те çĕршер-пиншер çын хутшăнчĕç. Вĕсем, „ССР Сойузĕн Верховнăй Советне суйламали Положенине" ăнлантарнипе пĕрлех, Верховнăй Совета тăратнă кандидатсемшĕн те вăйлăн агитацилерĕç. Паллах, çак пысăк политикăлă ĕçре, партире тăман актив та хăйĕн пĕлӳне чылайах хăпартрĕ. Халҍхи вăхăтра кашни пуçламĕш парторганизаци çумĕнчех ĕçре тĕрĕсленнĕ партире тăман боҍшевиксем темĕн чухлех. Ку активпа ĕçлени, вĕсене ĕçре пулăшса пыни кирлĕ. Анчах хăшпĕр районти парторганизацисем партире тăман активпа ĕçлемеççĕ. Ку партин речĕ çителĕксĕр ӳсниинчен те лайăх курăнать. Хĕрлĕ Чутай, Çĕрпӳ районĕсенчи парторганизацисенче парти ретне икшер çын, Шупашкар райкомĕ пĕр çын кăна илнĕ.

МТС-ри парторганизацисем те парти ретне ӳстерес тĕлĕшпе чăтма çук начар ĕçлеççĕ. Республикăра 18 МТС-ри парторганизацисенчен 8-шĕ пĕр çынна та парти ретне илмен. Шупашкар хулинчи 36 парторганизацинче 1937 çул хушшинче пĕр çынна та партине илмен.

Кандидатран парти членне куçарасси те питĕ йерипен пырать. Иртнĕ çулта Патăрйел райкомĕ 24 кандидатран 4-шне, Çĕмĕрле райкомĕ 83 кандидатран 3-шне, Тăвай райкомĕ 34 кандидатран пĕрне çеç парти членне куçарнă.

Йулашки вăхăтра партине илес ĕçре партийе йурăхсăр практикă сарăлни палăрать. Чылай парторганизацисем парти ретне ӳстерес ĕçе йертсе пымаççĕ. Партийе кĕрес текенсем парти ретне кĕме ыйтусем парсан та, вĕсене вăхăтра пăхса тухмаççĕ, йе рекомендацисем памасăр тăраççĕ. Çапла вара уйрăм коммуниссем рекомендаци паман пирки, партишĕн тăрăшса ĕçлекен çынсемех партийе кĕреймеççĕ. Акă, Улатăр районĕнчи парти кандидачĕ Ф. Е. Момота йулташ 1925 çултанпа парти членне куçаймасть. „Вăл Одессăра çуралнă, епĕр ăна лайăх пĕлместпĕр" тесе рекомендаци памаççĕ.

„Рекомендаци паракансем партийе вĕсен рекомендацийĕпе кĕрекенсемшĕн ответ тытаççĕ, тивĕççĕр рекомендаци панисем парти умĕнче хăйсене партирен кăларса йаричченех айăпланма пултараççĕ", тенĕ партин уставĕнче. Паллах, парти членĕн рекомендаци паракан çынна тĕплĕн пĕлмеле, анчах хăйне-хăй страхлас шутпа рекомендаци памасăр тăракан коммуниссене сивлемеле.

Партийе илес çĕрте революцилĕ сисĕмлĕх çӳлте пулмала. Парти Тĕпкомĕ ПСК(б) Партине çĕнĕ членсем илессине çĕнĕрен пуçарса йарасси çинчен парти организацисем патне йанă çырăвĕнче—тăшманла елементсем малашне те ПСК(б)П ретне кĕрсе кайма хăтланассине парторганизацисене асра тытса тăма хушнă. Парторганизацисен боҍшевикла сыхăлăха пур майсемпе те ӳстерсе пымала.

Парти Тĕпкомĕн кăтартăвне тĕрĕс ăнланас пулать. Парти ретне ӳстерес ĕç хăй тĕллĕн пырассине шанмала мар, ку ĕçе организацилени кирлĕ. Уйрăм парторганизацисем партире тăман боҍшевиксене партине кĕме пулăшас вырăнне, вĕсене екзамен тума тапратаççĕ.

Парторганизацисен кун пек çитменлĕхсене кĕске вăхăтрах пĕтермеле. Парти ретне ӳстерес ĕçе боҍшевикла йертсе пымала. Чи малтан ССР Сойузĕн Верховнăй Советне суйланă вăхăтра палăрнă партире тăман активпа, комсомолецсемпе, сочувствуйушчисемпе куллен ĕçлесе пымала, вĕсене вĕрентсе парти ретне илме хатĕрлемеле. Парти ретне ӳстерес ĕçре уйрăмах сочувствуйушчисем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Анчах парторганизацисем сочувствуйушчисемпе питĕ çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Парторганизацисем сочувствуйушчисемпе ĕçлеме парахнă пиркийех ĕнтĕ хăшпĕр районсенче сочувствуйушчисен хисепĕ чакни палăрать. Шăмăршă районĕнче иртнĕ çулта 35 сочувствуйушчи пулнă, халĕ—23, Патăрйел районĕнче 48-тан 38, Шупашкар хулинче 123-рен 119 сочувствуйушчи йулнă.

Чылай парторганизацисем сочувствуйушчисене партин уçă пухăвĕсене те чĕнмеççĕ, вĕсене парти порученисем памаççĕ, парсан та ăна пурнăçланине тĕрĕслемеççĕ, нимрен ытла вĕсен политикла пĕлĕвĕсене ӳстерес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Ку çитменлĕхе кĕске вăхăтрах пĕтермеле.

Халҍхи вăхăтра кашни парторганизаци умĕнче тăракан задачă вăл—парти ретне ӳстерессипулать. Анчах кунта ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ парти кандидатне илессине, кандидатран парти членне куçарассине ушкăнпа мар, кашнине тĕплĕн пăхса уйрăм суйласа илмели çинчен кăтартса панине хытă астумала. Çав вăхăтрах революцилĕ сыхăлăха çӳле тытмала, парти ретне халăх тăшманĕсем кĕресрен хытă сыхланмала.

П. Перлов.

Парти вĕрентĕвне тата лайăхрах организацилер

Парти вĕрентĕвне тивĕçлипе организацилесе парти членĕсене, кандидачĕсене, сочувствуйушчисемпе комсомолецсене тата партире тăман боҍшевиксене коммунисла воспитани парасси питĕ пысăк та ответлă ĕç пулса тăрать.

Куславкка райкомĕнче ĕçлекенсем парти вĕрентĕвне организацилес ĕçре пропагандис тĕп вырăнта тăнине лайăх ăнланса илнĕ. Çавăнпа та пропагандиссене суйласа илессине пысăк вырăна хураççĕ. Кунта райком секретарĕсем, райком членĕсем, инструкторсем кашнийех политкружоксенче пропагандиссем пулса ĕçлеççĕ.

Акă тĕслĕхрен: Парти райком секретарĕ Липатов йулташ Ленин—Сталин уйрăм произведенийĕсене вĕренекен кружокра пропагандис пулса ĕçлет; райком членĕ—Лукойанов йулташ политграмотă кружокĕнче ĕçлет; çавăн пекех райком членĕ Муромцева йулташ та пропагандис пулса ĕçлет; райком инструкторĕсем те политкружоксенче ĕçлеççĕ.

Партин Куславкка райкомĕ пропагандиссене тĕплĕн пĕлсе суйласа илнĕ, çавăнпа кунта парти вĕренĕвĕ те лайăх пырать. Çавăнпа пĕрлех райком пропагандиссене куллен ĕçре пулăшса, вĕрентсе пынине те паллă тумасăр хăварма йурамасть. Пропагандиссене пуçтарса тăтăшах семинарсем туса иртереççĕ. Семинарсене пуçтарăнниă пропагандиссем хăйсен ĕçĕнчи опытсене пĕр-пĕрне каласа парса, ĕçри çитменлĕхсене вăхăтра пĕтерме май параççĕ.

Халҍхи вăхăтра Куславкка районĕнче 35 политшкул ĕçлет, вĕсенче 538 çын вĕренеççĕ. Вĕренекенсенчен парти членĕсем—103; парти кандидачĕсем—54; сочувствуйушчисем—60; партире тăманнисем—252 çын; комсомолецсем—69 çын (ку шута комсомолецсен политшкулĕсенче вĕренекенсем кĕмеççĕ).

Политшкулсенче вĕренекенсем хăйсен политикăла пĕлӳлĕхне ӳстерсе пынипе пĕрлех, халăх хушшинче общественлă ĕçе те активăн хутшăнса ĕçлеççĕ. Вĕренекенсенчен нумайĕшĕ халҍхи вăхăтра агитаторсем пулса ĕçлеççĕ.

Вĕренекенсенчен чылайĕшне ответлă вырăнсенче ĕçлеме илнĕ. Акă Гнусарйов йулташ Куславкка комбинатĕнче тухса тăракан хаçатăн редакторĕ пулса ĕçлет; Жиглайев йулташ парткабинет пуçлăхĕ пулса ĕçлет; Петрйаков—рабочисен кооперативĕн председателĕ. Капустина—районри сывлăха сыхлав пайĕн пуçлăхĕ; Короҍов—Вăрнарти фосфорит завочĕн директорĕ пулса ĕçлет. Çакăн пек вĕренӳре ӳссе çитĕннĕ 33 çын халҍхи вăхăтра районри ответлă вырăнсенче ĕçлеççĕ.

— Пирĕн районра парти вĕрентĕвне начарах организацилемен, анчах çавăнпа пĕрлех, пирĕн ĕçре çитменлĕхсем те нумай-ха. Хăшпĕр политшкулсенче занҍатисене вăхăтра туса иртермеççĕ, вăл анчах та мар—занҍатисем пулмасăр иртсе кайнисем те пулнă. Акă Йелчĕкри политшкулта икĕ занҍатине тумасăр иртернĕ, Куславкка комбинатĕнчи политшкулта та икĕ занҍати пулман. Хăшпĕр коммуниссем те политзанҍатисене пымасăр пăрăнса çӳреççĕ. Николайев, Гаврилов, Максимов, Маркин йулташсем йалан ах занҍатисенчен пăрăнса йулаççĕ. Вĕсем пирки парти райкомĕн бӳровĕнче сӳтсе-йавнă.

Парти вĕрентĕвне лайăх организацилес ĕçре районри парткабинетăн та пулăшса пымала. Вĕренекенсене тата пропагандиссене куллен хи ĕçре консуҍтацисем парса пырас ĕçре парткабинет малти вырăнта тăмала. Анчах та вăл начар ĕçлесе пырать-ха. Çавăн пекех политшкулсем валҍҍи кирлĕ литературăсем те çителĕксĕр. Çакăнтах райкомăн пропагандăпа куҍтурă пайĕн çитменлĕхĕсем пирки те каламала. Вăл та парти вĕрентĕвне тата лайăхрах йĕркелесе йарас тĕлĕшпе çителĕклĕ таран ĕçлесе пымасть-ха.

Парти вĕрентĕвне лайăх организацилени урлă парти ретне ӳстерессе те хăпарсах пырать. Политикăла воспитани илнĕ йулташсем парти ретне кĕреççĕ. Халҍхи вăхăтра кунта 11 çынна парти кандидатĕнчен членна куçарнă; 10 çынна парти кандидатне илнĕ. Парти организацин парти вĕренĕвне хутшăнтарнă. Коммуниссене цурне те лайăх вĕрентсе кăлармала тăвас пулать.

Н. Косойкин.

Папанинцăсене кĕтсе илме

ЛЕНИНГРАД, мартăн 9-мĕш. Пайан 13 сехет те 25 минутра папанинцăсене кĕтсе илме „Трувор" пăрçĕмĕрен Фински заливне тухса кайрĕ. Пăрçĕмĕрен çинче—Папанинăн, Ширшовăн, Кренкелĕн тата Федоровăн тăванĕсем, общественлă организацисемпе пичет представителĕсем.

Паттăр поҍарниксене Кронштадт хыçĕнче кĕтсе илме шутлаççĕ. „Трувор" хăйпе пĕрле „Йермак" çине пушатма тесе çĕркăмрăкĕ илнĕ.

* * *

Ленинград хули папанинцăсене кĕтсе илме савăнăçлăн хатĕрленет. Пур çĕрте те хĕрлĕ хăмачсем, саламласа çырнă лозунгсем, çурçĕр поҍусне хăйулăн çĕнтерекенсен портречĕсем.

Пысăк предприйатисем паттăрсене кĕтсе илме йатлă çынсене уйăрса хунă. Пайан Ленинграда „Таймыр" тата „Мурман" пăрçĕмĕренсем çинчи командăсен делегацийĕ çитрĕ. Делегацине Барсуковпа Котцов йулташсем йертсе пыраççĕ. Ленинградра папанинцăсене кĕтсе илнине кинолентă çине ӳкерсе илме „Сойуз инохроникăн" Мускаври студийĕ килнĕ.

(ТАСС).

Положенине вĕренетпĕр

ВĂРНАР. Епĕр Кӳлхĕррринчи колхоз амрăкĕсем РСФСР Верховнăй Советне суйламали Положенипе Конституцине кружоксенче йĕркелĕ вĕренме тытăнтăмăр. Халҍ виçĕ занҍати туса иртертĕмĕр. Пире вĕренӳре Флегентов йулташ лайăх йертсе пырать.

В. Йугин.

Наградăсем панă

ССР Сойузĕн Верховнăй Совет Президиумĕн 1938 çулхи мартăн 8-мĕшĕнчи указĕпе Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн соединенийĕсенче, чăçĕсенче тата подразделенисенче çар ĕçне, политикăна тата техникăна вĕренес тĕлĕшпе калама çук пысăк çитĕнӳсем тунăшăн Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн командирĕсене, политработниксене, кĕçĕн командирсене тата красноармейцăсене пурĕ 210 çынна ССР Сойузĕн орденĕсемпе наградăланă.

Майор П. А. Шкодинпа батаҍйон комиссарне Й. А. Шулйатникова Ленин орденĕпе наградăланă.

41 çынна Хĕрлĕ йалав орденĕпе наградăланă, 91 çынна Хĕрлĕ çăлтăр орденĕпе тата 76 çынна „Знак почета" орденĕпе наградăланă. (ТАСС).

ХРОНИКĂ

* ССРС правителствипе Иран правителстви хушшинче пулнă калаçусем хыççăн, кăçалхи апрелĕн 1-мĕшĕнчен Иранăн ССР Сойузĕнчи консуҍствисене, Бакури консуҍствăсăр пуçне, пурне те хупасси çинчен, çавăн пекех ССР Сойузĕн Иранри консуҍствине те, Пехлевири консуҍствăсăр пуçне, пĕтĕмпех хупасси çинчен килĕшӳ тунă.

Çакăнпа пĕр вăхăтрах ССРС, Латви тата Швеци правителствисем хушшинче Латвипе Швецин Ленинградри консуҍствисене хупасси çинчен килĕшӳ тунă.

* Мартăн 8-мĕшĕнче, ирхине Грецин ССР Сойузĕнчи ĕçĕсен поверенннăйĕ г. Д. Николопулос хăйне хăй вĕлерне. Хăй çырса хăварнă хут çинче г. Николопулос çакна кăтартса панă: вилĕм сăлтавĕ пĕтме пĕлмен, хăйне тӳсме çук асап кӳнĕ чир пулса тăрать, тенĕ. (Хырăм ракĕ пулнă тесе шухăшлаççĕ).

Ответлă редактор Н. М. СЕМЕНОВ.

Колхозсене тата колхозниксене пĕлсе тăма

Чăваш республикинчи выҍăх хатĕрлев кантурĕ республикăн пур районĕсенче те конвенцилĕ хакпа государствă валҍҍи выҍăх-чĕрлĕх, аш-какай, чăх-чĕп тата кроликсем сутăн илет.

Выҍăх-чĕрлĕх сутăн илме колхозсемпе договорсем тăвать, договор тунă хыççăн сутăн илнĕ выҍăх хакĕнчен колхозсене 20 процент таран аванс парать.

Хăйсен договорĕ тăрăх выҍăх панă хыççăн колхозсене кооперации урлă таварсем сутать:

Автомашинăсем, камерăсемпе пĕрле автокрышкăсем, велосипедсем, камерĕсемпе пĕрле велокрышкăсем, суртлă тимĕр, витмели тимĕр, строителствă пăтисем, çапмали пăтасем, тимĕр пралуксем, шултра йăвăç, çурнă хăма, етернит, динамомашинăсем, нефтедвигателсем, електромоторсем, тимĕр пичкесем, вĕрен, хуçалăхри сăнчăрсем, тоҍ, чӳрече кантăкĕсем, фанерă. Ку таварсене выҍăхсене пĕрре мĕш çурçуллăхра сутнинчен 50 процентлăх тата выҍăхсене иккĕмĕш çурçулăхри сутнинчен 30 процентлăх сутаççĕ.

1938 çулта вăкăрсем тата сыснасем сутăн илме колхозниксемпе договорсем тăвать, выҍăх сутма тунă договорпа выҍăх хакĕнчен колхозниксене 20 процент таран аванс парать.

Колхозсемпе колхозниксем асăрхăр. Выҍăх сутма районти выҍăх хатĕрлев кантурĕпе договорсем тăвăр. Хвăвртан ытлашши выҍăха выҍăх хатĕрлевне сутăр.

Сутăн илнĕ пур выҍăха та выҍăх хатĕрлев кантурĕ централизованнăй снабжени валҍҍи рабочисен центăрĕсене тата Хĕрлĕ Çара парать.

Пур справкăсемпе те районсенчи: Улатăрти, Елĕкри, Патăрйелти, Вăрнарти, Канашри, Сĕнтĕрвăрринчи, Пăрачкаври, Мăн Сĕнтĕрти, Вăрмарти, Шупашкарти, Çĕмĕрлери, Çĕрпӳри тата Йетĕрнери выҍăх хатĕрлев кантурĕсенче ыйтăр.

Республикăри Выҍăх хатĕрлев кантурĕ.

Шупашкар хули Совечĕн президиумĕ йышăннă постановлени тăрăх коммуналă предприйати „ВОДОСВЕТ" уйрăм ĕçлекен икĕ предприйатийе уйăрăлать:

1. „ШУПАШКАР ХУЛИ ЕЛЕКТРОСТАНЦИ" Расчот счочĕ № 17 Коммуналă банкра. Телефон № 384.
2. „ШЫВПА КАНАЛИЗАЦИ ТЫТĂМĔ" Расчот счочĕ № 29/41 Коммуналă банкра. Телефон № 7-46.

3—2

Шупашкар хули електростанцине АСЛА БУХГАЛТЕР ТАТА БУХГАЛТЕР КИРЛĔ

Ĕçукçи килĕшӳ тăрăх.

Адрес: Шупашкар, Чувашскайа урам, „Водосвет поçолки" Електростанци кантурĕ.

3—2

Академи театрĕнче

Мартăн 11-мĕшĕнче

Вырăсла спектакҍ

ШЕКСПИР

ОТЕЛЛО

(4 пайлă)

Аслă режиççор Г. В. СТРАНСКИЙ лартать.

Талон № 133.

АНОНС! Н. В. Гогоҍ. „РЕВИЗОР" Лартма хатĕрленеççĕ.

Граждансем!

Ерех посудисене ерех магазинĕсене парăр! Посудăсемшĕн укçан тӳлеме ыйтăр.

Ерехсемпе, ликерсемпе сутă тăвакан пур магазинсем те ерех посудисене темĕн чухлĕ пулсан та йышăнаççĕ.

Ерех завочĕн тытăмĕ.

3—1

Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх комиссариачĕн ăратлă выҍăх хатĕрлекен кантурне

йалан ĕçлеме кирлĕ:

Аслă бухгалтер заместителĕ 1.
Расчот уйрăмĕн бухгалтерĕ 1.

Ĕçукçи килĕшӳ тăрăх.

Çак адреспе пымала. Шупашкар хули, Карл Маркс урамĕ, 7. Çĕрĕç халăх комиссариачĕн ăратлă выҍăх хатĕрлекен кантурĕ.

Телефон № 0-57.

2—1

Опытлă тракторист васкавлă кирлĕ

„СТЗ" тракторпа ĕçлемеле пулать

Ĕçукçи килĕшӳ тăрăх.

Çак адреспе пымала:

Вăрнар районĕ, ТУВАҌКИНĂ КОЛХОЗА.

2—2

„Чăваш Коммунĕ" çырăнса илмели хаксем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха 15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 125. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 107 Тираж 15.065 25—04 м. п. 1—1 п. л.